24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 23 ЭРНЕКУН 19 (6044) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем,

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Машинно-тракторнăй станцисенчи политотделсем

1942 çулти çураки пĕлтĕрхи çуракинчен урăхларах условисенче пулса иртет. Çавăнпа та вăл ялхуçалăх работникĕсене ытларах вăй хурса ĕçлеме, ĕçе уйрăмах лайăх организацилесе ертсе пыма хушать. Нумай колхозсем иртнĕ кĕрхуннe çĕртме сухине çителĕклĕ таран çĕклесе хăварайман. Пирĕн ялхуçалăхĕнче ĕçленĕ чылай трактористсемпе комбайнерсем, рабочисемпе колхозниксем фронта, тăван çĕршыва сыхлама кайрĕç. Çаксем пурте килес çураки вăхăтĕнче пирĕн умма çĕнĕ задачăсем кăларса тăратаççĕ, пире уйрăмăнах пĕлсе ĕçлеме, организованно пулма хушаççĕ.

Кăçал пирĕн колхозсен акмалли çĕр лаптăкне нумай анлăлатмалла тата тĕштырăсемпе техникăллă культурăсен тухăçне хăпартмалла, халиччен туман çĕнĕ культурăсене акса тумалла.

Социализмлă ялхуçалăхĕн резервĕсем пысăк. Халĕхи условисенче кашни тракторпа, кашни ялхуçалăх машинипе тата лаша вăйĕпе туллин усă курмалла. Çĕршер трактористсем стахановла ĕçлесе мухтава тивĕç çитĕнӳсем тăваççĕ. Вĕсен опытне анлăн сарса, ыттисене те вĕсем пек ĕçлеме вĕрентмелле, çапла вара çĕршер пин гектар çĕнĕрен сухаласа акса хăвармалла.

Вăрçă вăхăтĕнче колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ пысăкках ӳсрĕ. Нумай колхозниксем, колхозницăсем ик-виçĕ çын тумалли ĕçсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Республикăри пĕтĕм колхозниксене, МТС рабочийĕсене вĕсем пек ĕçлеме çĕклесе, стахановецсен ретне кунран-кун йышлантарса пырас пулать, пĕтĕм вăя çуракине йĕркеллĕн тата срокра пурнăçлас, пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçе хурас пулать. Çакна тумашкăн партипе совет организацийĕсен, МТС тата колхоз руководителĕсен, вăхăта пĕр минута та сая ямасăр, çуракине большевикла хастарлăхпа хатĕрленме тытăнмалла.

Çуракине хатĕрленес ĕçре, çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртерес енĕпе МТС политотделĕсем умне пысăк задача лартнă. Вăрçă условийĕсенче ялхуçалăх умĕнче тăракан пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама май парас тесе, ВКП(б) Центральный Комитечĕ машинно-тракторнăй станцисенче политотделсем организацилеме йышăнчĕ. Пирĕн республикăн машинно-тракторнăй станцийĕсенче политотделсем хăйсен ĕçне тума тытăнчĕç ĕнтĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ хăйĕн постановленийĕнче политотделсен задачисене уççăн кăтартса панă. Сталин юлташ ĕçсыннисене фронта вăйлăн пулăшса тăма чĕнсе калани, Хĕрлĕ Çар вăрçă фрончĕсенче тăшмана çĕмĕрсе çĕнтерӳсем туса пыни колхозниксене ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума çĕклерĕ. Колхозсенче тата машинно-тракторнăй станцисенче ĕçе пултаруллăн, тимлĕн туса пыракан йышлă актив ӳссе çитĕнчĕ. Политотделсен хăйсен ĕçне çав актив çине таянса туса пымалла, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене хăйсен тавра пĕтĕçтермелле. МТС рабочийĕсемпе служащийĕсем хушшинче тата вĕсен ĕçĕпе çыхăннă колхозсен членĕсем хушшинче политикăллă ĕçе вăйлатасси, ялхуçалăх ĕçĕсен планне вăхăтра пурнăçлас тĕлĕшпе машинно-тракторнăй станцисемпе колхозсен пĕтĕм ĕçĕнче дисциплинăпа йĕркелĕх тăвасси—политотделсен пысăк задачи пулса тăрать.

Машинно-тракторнăй станцисемпе колхозсенчи çулăмлă патриотсене политотделсен хăйсем тавра пĕтĕçтермелле, вĕсен партипе комсомол организацийĕсем çине таянса ĕçлемелле, вĕсем пулăшнипе колхозниксен пĕтĕм массине, машинно-тракторнăй станцисенче ĕçлекен рабочисемпе служащисен пĕтĕм массине ялхуçалăх умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилемелле. Колхозниксен, МТС-сен ӳссе пыракан производствăллă тата политикăллă активлăхне пуçарса ертсе пымалла, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе сарăлса пыракан социализмлă ăмăртăва колхозсенче татах та вăйлăнрах сарса ямалла.

МТС политотделĕн начальникĕ МТС директорĕн заместителĕ пулса тăрать. Вăл политикăллă ĕçе ертсе пырать, çавăнпа пĕрлех хуçалăх планĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе те директорпа танах ответ тытать.

Политотдел начальникĕ МТС çумĕнчи парти тата комсомол организацийĕсене ертсе пырать, машинно-тракторнăй станцисенче партиллĕ-политикăллă ĕçе туса пырать, çак ĕçшĕн вăл ответлă пулса тăрать. МТС политотделĕ машинно-тракторнăй станцисем ĕçлекен районсенче партипе комсомолăн колхозсенчи организацийĕсене ĕçре куллен пулăшса тăмалла, вĕрентмелле, партин районри комитечĕпе çирĕп çыхăну тытса, вăл колхозсенчи парторганизацисен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăмалла.

1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ—кашни колхозшăн, кашни машинно-тракторнăй станцишĕн закон пулса тăрать. Вăл план фронт интересĕсенчен, нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкас задачăран тухса тăрать, ăна вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек хăвăрт тата пысăк пахалăхпа пурнăçламалла. Çак плана вăхăтра пурнăçлас тĕлĕшпе политотдел начальникĕсем МТС директорĕсемпе танах ответ тытаççĕ. Колхозниксем тата МТС рабочийĕсемпе служащийĕсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пырса, политотделсен çуракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пымалла, çуракине кăтартуллăн ирттерессишĕн кĕрешмелле.

Республикăри хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисем халĕ те тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе çителĕклĕн туса пымаççĕ, унта рабочисем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕç те тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Ку шута Шăхасан, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕсенчи машинно-тракторнăй станцисем кĕреççĕ. Политотделсен задачи—машинно-тракторнăй станцисен пĕтĕм машинисене юсаса çитерес, вĕсене çуракине тухма хатĕр тытса тăрас ĕçе организацилесси пулса тăрать.

Çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçе кадрсем татса параççĕ. Кадрсене суйласа илесси, вĕсене вĕрентсе хатĕрлесси вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Механизаторла кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисем трактористсен курсĕсене организацилерĕç. Анчах нумай МТС-сенче ку ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Кадрсен резервĕ енчен пирĕн колхозсем пуян. Вĕсене кĕске срoклă курссенче, шкулсенче вĕрентмелле, хăйсем тĕллĕн вĕренсе квалификаци илме май туса парас пулать. Çамрăк кадрсене политикăллă воспитани парас ĕç—политотделсем тумалли чысла ĕç. Вĕсене обществăллă-политикăллă ĕçе анлăн хутшăнтарса пымалла, ĕç çине патриотла пăхма, çĕршыв тата фронт умĕнчи хăйсен тивĕçне туйса ĕçлеме вĕрентмелле. Уйрăмах хĕрачасене машинăсемпе ĕçлеме йышлăн вĕрентес пулать.

МТС политотделĕсен, большевикла хастарлăхпа ĕçе тытăнса, колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен ĕçне çĕнĕ пусăма çĕклемелле, кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илсе, çĕршывпа фронт валли продуктсемпе чĕртавар ытларах туса парассишĕн пĕтĕм вăя мобилизацилесе кĕрешмелле.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противника пыра-пыра çапса тата нимĕçсен фашистла войскисем оборонăн çĕнĕ рубежĕсенче çирĕпленсе лармa хăтланнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, малалла ăнăçлăн куçса пынă; халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Противник пысăк çухатусем тӳсет.

Январĕн 20-мĕшĕнче нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 1 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 20-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 3 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 325 автомашинине, боеприпассем турттарса пыракан 400 яхăн лавне, 7 орудине прислуги-мĕнĕпех пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕтсе янă, чугун çул çинчи 44 вагона аркатса тăкнă, противник пехотин 3 батальонне салаласа ярса пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Можайск хулине йышăннă чухне пирĕн войскăсем, малтанласа шутланă туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăн 20 орудине, 76 автомашина, боеприпассен тата интендантски пурлăхсен 3 складне тытса илнĕ. Нимĕçсен аркатса тăкнă 7-мĕш пехотнăй дивизин, 3-мĕш мотодивизин тата 197-мĕш пехотнăй дивизине кĕрекен 325-мĕш пехотнăй полкĕн юлашкийĕсене пирĕн войскăсем хĕвеланăç еннелле хăваласа пыраççĕ. Нимĕçсем уйрăмах çынсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

* * *

Кондрово хулишĕн пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн чаçсем нимĕçсен 17-мĕш тата 260-мĕш пехотнăй дивизийĕсене питĕ пысăк поражени кӳнĕ, нимĕçсен «СС» уйрăм батальонне пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Хула урамĕсенче пирĕн боецсем тăшманăнне 5 танк, 53 автомашина, 20 станковăй пулемет тата ытти трофейăсем те нумай тытса илнĕ.

* * *

Федюнинский юлташăн боецĕсем (Ленинград фрончĕ) противник çине наступлени тунă чухне икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенне 10 оруди, 9 пулемет, 2 броневик, 12 машина, 4 миномет, 3 йывăр танк пĕтерсе тăкнă, тăшманăн çĕрпе йывăçран тунă 11 огневой точкине аркатнă тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Çапăçу пирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 500 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Украинăри И. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансем темиçе кун хушшинче ăнăçлă боевой операцисем чылай туса ирттернĕ. Н. хулинче партизансем Итали офицерĕсем вырнаçнă гостиница çине бомбăсем пăрахса, Итали захватчикĕсене 10 çынна яхăн вĕлернĕ. Çак хуларах партизансен группи тăшманăн боеприпассем турттарса пыракан 2 автомашинине сирпĕнтерсе янă. С. ялĕнче партизансем, Итали чаçĕн штабне аркатса тăкса, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 18 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Х. станцинче отрядри боецсем нимĕç салтакĕсене турттарса пыракан çар эшелонне тӳнтерсе янă, станцирен инçех те мар виçĕ нимĕç офицерĕ ларса пыракан çăмăл машинăна сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 260-мĕш дивизийĕнчи 470-мĕш пехотнăй полкран тыткăна лекнĕ лейтенант Карл Эрнст çапла каласа панă: «Манăн взвода Орлово ялĕнчен 5 километр хĕвеланăç еннерехри вăрман хĕрринчи позицие йышăнса илсе ăна тытса тăма приказ пачĕç. Ир енне пире вырăссем атакăларĕç. Взводăн виçĕ пулемет пурччĕ. Манăн çынсем темиçе хутчен перкелерĕç те каялла чакма пуçларĕç. Эпĕ вĕсене чарăнма хушрăм, анчах вĕсем чарăннин усси çук тесе тавăрчĕç. Салтаксем тарса пĕтрĕç те эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм, вара мана тыткăна илчĕç».

* * *

Ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсен 9-мĕш çарĕн командованийĕ соединенисемпе чаçсен командирĕсене 1440—41-мĕш номерлĕ вăрттăн çыру ярса панă. Çырура çапла каланă: «Главнăй командовани пĕлтернĕ тăрăх, запасри чаçсенче хăшпĕр специалистсем: пур тĕрлĕ специальноçлă шоферсем, оруди мастерĕсемпе оруди мастерĕсен помощникĕсем, наводчиксем, механиксем, связистсем пачах та çук, çавăнпа та вĕсене яма ыйтса заявкăсем пама та кирлĕ мар».

* * *

Мускав облаçĕнчи Мало-Ярославец районĕнчи Терентьевка ялĕнчен тухса кайнă чухне нимĕç бандичĕсем урамра 73 çулти Орлов хресчене, 70 çулти Чириковăна тата 13 çулти Сергеева тытса чарса вĕсен çийĕнчи тĕрĕксемпе çăматăсене хывса илнĕ те хăйсене персе пăрахнă.

Январĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Говоров юлташăн боецĕсем, гитлеровецсем хирĕç тăнине сирсе пырса, противникăнне 11 оруди, 54 автомашина, 15 мотоцикл тата ытти çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Селезнев юлташăн чаçĕ, противника хирĕç икĕ кун хушши хаярран çапăçса, нимĕçсене пысăк сиен кӳнĕ, противникăнне оруди, миномет, 11 пулемет, 1.500 снаряд, 21.000 патрон тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче кĕрешекен пирĕн часть икĕ кун хушшинчи çапăçусенче тăшманăн 30 орудине, 28 пулеметне, 12 минометне тата çар пурлăхĕсем турттарса пыракан 30 лавне тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.400 çынна вĕлернĕ.

* * *

Гитлеровецсем халăх пурăнакан вăйлă çирĕплетнĕ Д. пункта вырнаçса ларнă пулнă. Красноармеец Пискунов, пĕр çурт патĕнчен тепĕр çурт патне чупса пырса, нимĕçсем çине гранатăсем ывăтнă та тăшманăн огневой точкисене пĕтерсе тăкнă. Çуртсенчен пĕринче çеç Пискунов юлташ нимĕçсен 8 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Ленинград партизанĕсен П. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ чугунçул çинчи пысăк кĕпере сирпĕтсе янă, çапла вара нимĕç войскисем валли боеприпассем турттаракан поездсем çӳрессине вунă кунлăха чарса лартнă. Çак отрядах икĕ йывăç кĕпере сирпĕтсе янă, противникăн телефон линийĕсене нумай вырăнта çĕмĕрсе пĕтернĕ тата стратегиллĕ çулсем çине минăсем лартса тухнă.

* * *

Нимĕçсен арми артиллерийĕн 67-мĕш полкĕнчи 2-мĕш дивизионран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Роберт Михаэлис çапла каласа панă: «Пур чаçсенчи салтаксем те вырăс çĕршывне хирĕç поход туса нимĕçсен çарĕ питĕ нумай танксем çухатни çинчен каласа параççĕ. Сăмахран, 10-мĕш танковăй дивизире 15 танкран ытла юлман. 4-мĕш армейски группа Ленинград патĕнче 80 танк çухатнă. Çак группа Можайск патĕнче те питĕ пысăк çухатусем тунă, кунта вĕсен танкĕсен 30 проценчĕ ытла пĕтнĕ. Халĕ машинăсемпе орудисен запаслă пайĕсем çитменни питех те палăрать. Икĕ машинăран пĕр машина тума та лекет».

* * *

Нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 240-мĕш полкĕн штаб ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Петр Энгель çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн полк хăйĕн личнăй составĕн 75 процентне çухатрĕ. Эпĕ нумаях та пулмасть батальон командирĕ—майор Геральд полк командирне Гинзенбера ӳпкелешсе çапла каланине илтрĕм: «Салтаксемпе халĕ нимĕн тума та çук. Вĕсем позицисене тытса тăмаççĕ, каялла тараççĕ. Темĕн тери вăрçни те, пăшалпа хăратни те текех пулăшу памасть».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Медынь районĕнчи халĕ нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă Варваровка ялĕнчи çынсем гитлерла мерзавецсен тискерлĕхĕсем çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: нимĕçсем пур хресченсене те çаратнă, хăйсем ялтан тухса каяс умĕн яла вут тивертсе хăварнă. Çунакан çуртсенчен чупса тухакан çынсене нимĕçсем пере-пере пăрахнă. Çапла персе вĕлернисем хушшинче О. Л. Платовăпа унăн икĕ ывăлĕ, А. С. Твороговăпа унăн виçĕ çулти хĕрачи, В. В. Ильинăпа унăн арăмĕ, пилĕк хĕрĕпе ывăлĕ, В. Д. Жижинăпа унăн икĕ ывăлĕ пулнă.

В. И. ЛЕНИН ВИЛНИ 18 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ АСĂНСА ПУЛНĂ ТРАУРЛĂ-ЧАПЛĂ ЛАРУ

Январĕн 21-мĕшĕнче, Владимир Ильич Ленин вилни 18 çул тултарнă кун, Мускавра ВКП(б) Центральный Комитечĕн, ВКП(б) Мускав область Комитечĕпе Мускав хула Комитечĕн, Коминтерн Исполкомĕн, ОССР Верховный Совечĕпе РСФСР Верховный Совет Президиумĕсен, ĕççынни депутачĕсен Мускав облаçĕпе хула Совечĕсен, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, ВЛКСМ Мускав область Комитечĕпе Мускав хула Комитечĕн, ВЦСПС президиумĕн, столицăри рабочи-стахановецсен, ударниксен тата интеллигенцин траурлă-чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

6 сехет те 50 минутăра президиум сĕтелĕ умне Сталин, Молотов, Калинин, Андреев, Микоян, Каганович, Берия, Маленков, Щербаков, Вознесенский, Кузнецов, Шкирятов, Бадаев, Ярославский, Щаденко, Попов, Пронин, Черноусов юлташсем тухаççĕ.

Сталин юлташа тата партипе правительствăн руководителĕсене нумайччен лăплантайми оваципе кĕтсе илеççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ, совет халăхĕн, Хĕрлĕ Çарăн çулпуçне — Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене çавтери кăмăллăн та ăшшăн саламлаççĕ. Хăватлă «урра» янăраса тăрать, залăн пур вĕçĕнчен те:

— Сывă пултăр Сталин юлташ!

— Пирĕн çулпуç тата полководец сывă пултăр!—тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

М. И. Калинин юлташ траурлă-чаплă ларăва кĕске сăмах каласа уçать.

— Юлташсем,—тет вăл,—Владимир Ильич Ленин вилни 18 çул тултарчĕ.

Унăн ятне ура çине тăрса асăнма ыйтатăп.

Пурте ура çине тăраççĕ. Оркестр траурлă марш вылять. Çак шăплăх тапхăрĕнче пурин те шухăшĕсем яланах пирĕн чĕрере çӳрекен çын çинче, Ленин çинче. Унăн ялавĕ, унăн аслă идейисем, унăн ĕмĕр вилми образĕ пирĕн халăхăн хăйĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн, тивĕçлĕхĕпе ирĕклĕхĕшĕн тыракан паттăр кĕрешĕвĕнче çул кăтартса пыраççĕ.

— Юлташсем,—тет малалла М. И. Калинин юлташ,—Ленин юлташ вилни 18 çул тултарнă куна эпир фашистла захватчиксене хирĕç хаярран кĕрешнĕ обстановкăра асăнатпăр.

Çичĕ уйăх хушши ĕнтĕ пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ тата мĕнпур Совет халăхĕ хăйĕн тивĕçлĕхĕпе ирĕклĕхне, пирĕн çĕршывăн никама пăхăнманлăхне çавтери паттăррăн та хăйне-хăй шеллемесĕр хӳтĕлет. Совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, телейĕшĕн, Совет Союзĕнчи халăхсем чечекленсе аталанассишĕн хăйсен пурнăçĕсене параççĕ.

Чи хаяр тăшмана—Германи империализмне хирĕç пулса пыракан çак отечественнăй аслă вăрçăра пирĕн халăх, коммунистсен партийĕ вăя ĕмĕр иксĕлми çăлкуçĕнчен—ленинизмран илсе тăраççĕ.

Ленин юлташа вилĕм пирĕнтен уйăрчĕ, анчах унăн образĕ совет стройĕн аслă çитĕнĕвĕнче, пирĕн коммунистсен партин хурçă пек çирĕп ретĕсенче, рабочисемпе хресченсен ĕмĕр иксĕлми союзĕнче, Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕнче, пирĕн çĕршыв çине килсе кĕнĕ фашистла йыткĕтĕвĕсене аркатса пыракан пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарта ĕмĕрлĕхех çăлăнса юлчĕ.

Юлташсем, кашни совет гражданинĕн, рабочин, колхозникăн, интеллигентăн таса обязанноçĕ халĕ фронта пур майсемпе те пулăшасси, хĕçпăшалсем, боеприпассем, снаряжени, промышленность валли чĕртавар тата фронтпа тыл валли продовольстви ытларах туса кăларас тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса ĕçлесси пулса тăрать.

— Пирĕн Ленин юлташăн сăмахне яланах асра тытмалла: «Вăрçă чăннипех туса пымашкăн çирĕп организациленнĕ тыл кирлĕ. Чи лайăх çарсене те, революцие чи парăннă çынсене те, — тенĕ Ленин юлташ, — вĕсем çителĕклĕ таран хĕçпăшалланман пулсан, вĕсем продовольстви илсе тăраймассĕ пулсан, вĕренсе хатĕрленмен пулсан, вĕсене противник çийĕнчех вĕлерсе пĕтерĕ».

Пире фронтри ăнăçусем лăплантарма пултараймаççĕ. Тăшмана тĕппипех çĕнтерес тесен, халăхпа çарăн вăйĕсене татах та ытларах пухма тивнине яланах асра тытар. Юлташсем, пирĕн тăшмана çĕнтерме кирлĕ условисем пурте пур.

Ленин пуçласа янă ĕç халĕ шанчăклă алăра. Совет Союзĕн халăхĕсемпе хĕçпăшаллă вăйĕсен пуçĕнче çĕнтерӳ символĕ пулса тăракан аслă çын — Сталин юлташ тăрать.

Траурлă-чаплă ларури çынсем çак сăмахсене, Сталин юлташа хисеплесе, хавхаланса хĕрӳллĕ оваци тунипе кĕтсе илеççĕ. Саламласа кăшкăрнисемпе хăватлă «урра» нумайччен лăпланмасть.

— Пурсăмăр та Сталин юлташпа пĕрле çапла калар, — тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне М. И. Калинин:—отечественнăй вăрçăра пире аслă Ленинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ çул кăтартса пытăр!

Сывă пултăр паттăр совет халăхĕ!

Мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ сывă пулччăр!

Сывă пултăр коммунистсен партийĕ!

Сывă пултăр Сталин юлташ!

Çак юлашки сăмахсем çумне мĕнпур зал хутшăнать, залра темиçе минута хушши:

— Сывă пултăр Сталин юлташ! Ура! — тесе кăшкăрни янăраса тăрать.

М. И. Калинин юлташ доклад тумашкăн А. С. Щербаков юлташа сăмах парать. Ларăва пухăннă çынсем А. С. Щербаков юлташа ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

Щербаков юлташăн уçăмлă та пысăк содержанилле докладне питĕ тимлĕн итлеççĕ. Щербаков юлташ нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсене хирĕç пулса пыракан вăрçă фронтĕнче Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсем çинчен, совет çыннисен хастарлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен, рабочисен, хресченсен, интеллигенцин иксĕлми çирĕп союзĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен ĕмĕр арканми туслăхĕ çинчен каланине ларăва пухăннă çынсем хĕрӳллĕн ал çупса йышăнаççĕ.

Ленин вилнĕ хыççăн, Сталин юлташ ертсе пынипе, совет халăхĕ мĕнле çул па пынин итогне, Гитлерăн вăрă-хурахла империализмне хирĕç пулса пыракан отечественнăй аслă вăрçăн 7 уйăх хушшинчи итогне туса, Щербаков юлташ çапла калать:

— Совет çĕршывĕ нимĕç захватчикĕсем чи малтан тата йывăррăн пырса çапнисене тӳссе ирттерчĕ. Совет çĕршывĕнчи халăхсен нимĕç захватчикĕсене тĕппипех аркатса тăкма, вĕсене пĕтĕмпех çĕнтерме тӳсĕм çитет.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре хамăран вăй-хăвата татах та ӳстерер.

Йăлтах вăрçă валли! Йăлтах фронт валли! Йăлтах çĕнтерӳ валли!

Хĕрлĕ Çарпа халăхăн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ сывă пултăр!

Сталин юлташа хисеплесе татах çĕнĕрен хăватлă оваци пуçланса каять. Пĕр лăпланмасăр ал çупнисем «урра» кăшкăрнипе, Совет Союзĕнчи халăхсен çулпуçне хĕрӳллĕн саламласа кăшкăрнисемпе пĕрлешсе каяççĕ.

Ларăва пухăннисем пурте «Интернационал» юрлаççĕ.

М. И. Калинин юлташ траурлă-чаплă лару хупăнни çинчен пĕлтерет.

Лару хупăннă хыççăн концерт пулнă. Концерта столицăри чи лайăх артистсем хутшăннă. Концертра СССР халăх артисчĕсем Михайлов, Козловский, Барсова, Рейзен, скрипачсен пĕтĕм тĕнчери тата пĕтĕм Союзри конкурсĕсен лауреачĕ Марина Козолупова, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Норцов, Академиллĕ Пысăк театрăн солистки Панова, СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн юрăпа ташă ансамблĕ, красноармеецсен СССР халăх артисчĕ Александров ертсе пыракан юрăпа ташă ансамблĕ пулнă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен летнăй тата технически составне награддăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — старший лейтенант **И. Д. Артеменкона**, полковник **А. А. Бурдина**, кĕçĕн лейтенант **Ф. Т. Демченкона**, полковой комиссар **И. Л. Екичева**, лейтенант **И. К. Костина**, кĕçĕн лейтенант **Г. И. Людвига**, капитан **И. Ф. Преснякова**, кĕçĕн лейтенант **А. Г. Хвастунова**.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе—107 çынна, **ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР орденĕпе** — 69 çынна, **«За боевые заслуги» медальпе** — 19 çынна наградăланă. (ТАСС).

Вăрман хатĕрлевĕнче

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Исаково ялсоветĕнчи пур колхозсем те вăрман хатĕрлевне активлăн хутшăнчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмăнах «Красная звезда», «Исаково» колхозсем малта пыраççĕ. Колхозри комсомолецсем И. Архипов, В. Иванов, Н. Николаев тата ыттисем те сменăри нормăна 170—200-шер процент тултарса, ыттисене пример кăтартаççĕ. Ку ялсовечĕ пурĕ 72 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, 20 кубометр турттарнă.

НИКИТИН.

Фронт валли пахча-çимĕçсем типĕтсе парать

Илья Алексеевич Елышев Вăрнар районĕнчи «Победа» колхозри ватă колхозниксенчен пĕри. Вăл утмăлалла çывхарать ĕнтĕ. Çапах та вăл ытти колхозниксемшĕн—пример. 1941 çулта Елышев хăйĕн арăмĕпе пĕрле 600 ĕçкунĕ тунă. Колхозра ĕçкунĕ пуçне 3 килограма яхăн тĕштырă тивет. Çапла вара вĕсем 2400 килограмм тĕштырă тата пахча-çимĕçсем илеççĕ.

Çакăнпа пĕрлех Елышев юлташ колхозра çĕнĕ ĕçсем пуçарса пыма тăрăшать. Кăçалхи çул Елышев пахча-çимĕçсем типĕтмелли кăмака шухăшласа тунă. Çак кăмакара вăл кĕске вăхăтрах 430 килограмм çĕрулми, 82 килограмм сухан тата кишĕр типĕтсе фронта янă та ĕнтĕ. Ку ĕçе халь вăл татах та вăйлатать.

М. ДАНИЛОВ.

Комсомолка ертсе пыракан бригада

СОВЕТСКОЕ. Уйкас-Асламасри «Искра» колхозра 4 бригада. Виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ пулса Варя Кутузова ĕçлет. Ытти бригадăсемпе танлаштарсан, унăн бригади яланах малта пырать.

Бригадăра икĕ звено. Звеносем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. 1-мĕш звенона VII-мĕш класра вĕренекен Л. Яковлева ертсе пырать. Ку звено хастарлă звено пулса тăрать. В. Кутузова бригади Н. Арсентьев комсомолец ертсе пыракан 1-мĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлет. Виççĕмĕш бригада январĕн 16-мĕш тĕлне авăн çапса пĕтерчĕ. Халь колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатма Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Вăрлăхсене сортланă. Хире 100 лав ытла тислĕк кăларнă, 1 тонна фекали, 100 пăт ытла кĕл пухнă, 60 пăт ытла фосфорит çăнăхĕ кӳрсе хатĕрленĕ. Вырăнти удобренисем пухас енĕпе хĕллехи каникул вăхăтĕнче А. Широковпа Н. Ершов пионерсем тăрăшса ĕçлерĕç. Колхоз правленийĕ вĕсене парне пучĕпе вĕренӳ хатĕрĕсем илсе пама пулчĕ.

Бригада çитес çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешес ĕçе планпа туса пырать. Çав плана колхоз правленийĕ пăхса тухса, хăйĕн ларăвĕнче çирĕплетнĕ.

Е. ИВАНОВ.

Вăрлăхсене сортлаççĕ

ИШЛЕЙ. Шурча ялсоветне кĕрекен «Самолет» колхоз çак кунсенче вăрлăх фондне 301 центнер ытла сортласа хучĕ. Вăрлăх сортлас ĕçе тума колхоз ятарласа звено организациленĕ. Звено вăрлăх сортлас ĕçе стахановла хăвăртлăхпа туса пырать.

Н. СУВОРОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Карели вăрманĕсенче

Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче белофинсен пысăк группировки Карели фрончĕн кăнтăрти участокĕнче наступлени пуçласа янă. Вăйĕсем пирĕннинчен чылай пысăкрах пулнă пирки белофинсен халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илме май килнĕ. Çав вăхăтрах ĕнтĕ Маннергейм çĕнтерÿшĕн хаваслама пуçланă. Анчах та çăсăлçăк фельдмаршалăн çепĕç ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕмен. Чернуха юлташăн чаçĕсем, белофинсем чи малтан пырса çапнине тÿссе ирттерсе, противникăн вăйĕ чылай пысăкрах пулнă пулин те, вăл малалла куçса пырассине вăрахлатнă. Н. станци умĕнче вăра ăна пачах чарса лартнă. Белофинсем çĕр ăшне чавса кĕрсе ларнă. Белофинсем, станцине тытса илес тесе, вунăпар хут атакăсем тунă; пирĕн боецсем хирĕç тăрассине вăйсăрлатас тесе, темиçе хутчен те хăйсен автоматчикĕсемпе «куккукĕсене» çапăçăва кĕртсе янă; анчах, темĕн хăтланнисен та, вĕсен ĕçĕсем ăнăçлă пулман.

Н. станцийĕшĕн пулса иртнĕ çапăçусенче противник питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ. Иртнĕ кунсенче çеç тыткăна илнисем калаçа панă тăрăх, наступлени пуçланă чухне 200-шер çын шутланнă пур ротăсенче те декабрĕн вĕçĕ тĕлне 30—25-шер çын çеç тăрса юлнă. Белофинсен арканса пĕтнĕ чаçĕсен текех наступлени тăвас шухăша пăрахăçа кăлармалла пулнă; вĕсем хăйсен сайралса юлнă речĕсене пултарнă хыççăн та станцие тытса илмешкĕн тепĕр хут кăтлanса пăхма хăяйман.

Пирĕн войскăсен контрнаступленийĕнчен хăранă пирки финсем станци умне питĕ вăйлăн çирĕплетнĕ, хăйсен çирĕплетнĕ линийĕн малти хĕрри патне пымалли вырăнсене минăсем лартса тухнă. Анчах çапах та пирĕн войскăсен контрнаступленийĕ вĕсемшĕн пачах та кĕтмен çĕртен тухса тăнă япала пулнă.

Пирĕн чаçсем Великая Губа ятлă поселок çине сасартăк наступлени пуçласа янă. Ирхи шăплăхра тупă сассисем пĕрин хыççăн тепри янăраса кайнă. Артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн çапăçăва пехота кĕрсе кайнă. Малта, тăшманăн пулемечĕсемпе автоматчикĕсем персе тăнă вăхăтрах, саперсем пынă. Вĕсем тăшманăн минисене шыраса тупса сиенсĕрлетнĕ те хыççăн пехота валли çул тасатса панă. Çав вăхăтрах сапер Лукашев противникăн боевой хуралĕнче вырнаçнă станоксăр пулемета, пирĕн наступлени тăвакан боецсем çине персе тăракансене, асăрханă. Лукашев ăна сиенсĕрлетме шут тытнă. Пĕр тĕм патĕнчен тепĕр тĕм патне куçса пырса, вăл пулемет патнех çывхарнă та, тăватă хутчен тĕл персе, расчетăн тăватă салтакне те пĕтерсе тăкнă. Пулемета тытса илсен, Лукашев юлташ ăна çийĕнчех тепĕр еннелле çавăрса, противник çинелле пеме тытăннă.

Çула тăшманăн минисенчен тасатнă чухне Пекшеев, Микрашевич, Финкин, Дмитриев тата Лунников юлташсем те çавăн пекех хăюллăн ĕçленĕ.

Тăшман вăйлăрах та вăйлăрах пеме тытăннă. Боецсен питĕ кĕске хушăсем урлă çеç чупса каçма, çĕр çумне ытларах та ытларах лапчăнма тивнĕ. Финсем çĕнĕ вăйсем илсе килнĕ, кашни тĕмескерен тытса чарăнма хăтланнă, Великая Губа патне пымалли çулăн кашни метрне хÿтĕленĕ. Поселок вĕсен хирĕç тăмалли паха, вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕ пулнă. Çавăнпа та финсем ăна вăйлăн хÿтĕленĕ. Вара çапăçăва пирĕн танксем кĕрсе кайнă. Орудисем кĕмсĕртетнин шавĕпе усă курса, вĕсем тăшманăн оборона тăвви патне систермесĕрех пырса çитнĕ те, чарăнса тăмасăрах противникăн сооруженийĕсене аркатма тытăннă. Пирĕн мухтавлă пехотинецсем танксем çумне çыпçăнса пынă; хăшĕсем тăрса, хăшĕсем ларса, тăшманăн лагерьне çĕмĕрсе кĕнĕ. Финсем вара нимĕн тума пĕлмесĕр сехĕрленсе ÿкнĕ. Хăйсене кĕтмен çĕртен пырса çапнинчен кăшт тÿрленсен, белофинсем хăйсен автоматчикĕсемпе пулеметчикĕсен ушкăнне мала кăларса янă. Поселока çĕмĕрсе кĕнĕ пирĕн подразделенисемпе танксене хамăрăн чаçăн штабĕнчен тата снабжени базисенчен уйăрса татса илнĕ. Вĕсем хушшинчи çыхăну таталнă. Великая Губа поселока пымалли çулăн пĕр пайĕ çине противник тăтăшах, малтанах тĕллесе хуни тăрăх, персе тăнă. Апат-çимĕç те, боеприпассем те, танксем валли горючи те турттарса пыма май килмен. Ялтан çапса кăларнă белофинсем иккĕмĕш кунне контрнаступлени тума хăтланса пăхнă. Азаров юлташăн подразделенийĕ питĕ йывăр положение кĕрсе ÿкнĕ: апат-çимĕç кăштах пулнă-ха, тата белофинсем пăрахса хăварнă апат-çимĕç запасĕсем те усă курма юранă, анчах боеприпассем пĕтсе пынă. Çапах та боецсемпе командирсем хăраса ÿкмен, хăйсен паттăрлăхне çухатман. Батальон командирĕ, парти членĕн кандидачĕ кĕçĕн лейтенант Павлов юлташ тата политрук Харитонов юлташ хăйсем йышăнса илнĕ поселока хÿтĕлес ĕçе питĕ ăста организациленĕ. «Вилетпĕр, анчах каялла чакмастпăр!» Çакăн пек пулнă Великая Губа поселока хÿтĕлекенсен лозунгĕ.

Патронсене перекетлĕн тăкаклаcа, паттăрлăх, ăсталăхпа чеелĕх кăтартса, пирĕн подразделенисем тăшман поселока тытса илме хăтланнисене пурне те сире-сире пăрахнă. Рыбальченко, Новиков, Лоскутников пулеметчиксем тĕл персе тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Кĕçĕн лейтенант Иванов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсен пĕчĕк группи, участоксенчен пĕрне хÿтĕлекенскер, тăшманăн 4 атакине сирсе ярса, фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна ытла вĕлерсе тата амантса стройран кăларнă.

Малашнехи икĕ кун хушшинче противник контрнаступлени пуçласа яма çичĕ хутчен хăтланса пăхнă. Пирĕн подразделенисен боеприпассем пĕтсе çитнĕ, анчах хĕрлĕ воинсем çапах та хăйсен паттăрлăхне çухатман. Асталăхпа чеелĕх вĕсене йывăр положенирен тухма пулăшнă. Лейтенант Мороз боецсен группипе пĕрле тăшманăн станковăй икĕ пулеметне тытса илнĕ те, вĕсене çапăçу вăхăтĕнчех юсаса, тăшмана хирĕç пеме тытăннă. Ытти подразделенисем те тăшманран тытса илнĕ патронсемпе, тăпалсемпе усă курса финсене аркатса пынă. Çак кунсенче вунăпар боецсем, командирсемпе политработниксем чăн-чăн паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă.

Взвод командирĕ Рубин юлташ, пĕр участокра тăшманăн «куккукĕсем» вырнаçса ларнине пĕлсе, хăюллисен группине организациленĕ те ухатана тухса кайнă. Винтовкăран персе икĕ «куккука» ÿкернĕ хыççăн Рубин юлташ, пытанса ларнă виççĕмĕш тăшман патне 10—15 метр çывăхне пырса, ăна та гранатăпа пĕтерсе тăкнă. Тăваттăмĕшĕ Рубин юлташа хăйне амантнă, анчах ку «куккука» та пирĕн боецсем персе вĕлернĕ.

Азаров юлташăн подразделенийĕсем, пулăшу илмесĕр, чаçăн штабĕпе çыхăну тытмасăр, противника хирĕç çапăçнă. Пиллĕкмĕш кунне вĕсем патне пĕр рота çĕмĕрсе кĕнĕ, тепĕр кунтан Великая Губа поселока ытти подразделенисемпе пĕрле чаçăн штабĕ те пырса çитнĕ. Противника поселок çывăхĕнчен хăваласа янă.

С. БЕССУДНОВ.
(«Правда» хаçатран).

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Мускаври 1-мĕш Гвардейски мотострелковăй дивизири танкистсем Хĕвеланăç фронтĕнче фашистла бандитсене геройла çĕмĕреççĕ. **Укерчĕк çинче:** Гвардейски дивизи командирĕ Совет Союзĕн Геройĕ генерал-майор Лизюков юлташ гвардеец-танкистсемпе калаçать.

Д. ЧЕРНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Тинĕс çинчи çунатлă гварди

Отечественнăй аслă вăрçăн сур çулталăкĕ хушшинче Тинĕс-çар флотĕнчи авиацин 1-мĕш минно-торпеднăй полкĕ совет авиацин историне темĕн чухлĕ чаплă страницăсем çырса хăварчĕ. 1-мĕш полкăн паттăр çыннисем пайтах мухтавлă ĕçсем турĕç. Халĕ çав полкран 1-мĕш гвардейски полк тунă.

Чаплă çапăçусен хисепне ку полк Германи çарĕн тинĕсри пысăк бази пулса тăракан Мемель хули çине вăйлăн пырса тапăннипе пуçласа янă. Совет Союзĕн Геройĕсен — Ефремовпа Плоткин капитансен эскадрильисем фашистсен çĕнĕ порчĕ çине çавтери вăйлăн бомбăсем пăрахса, тăшманăн транспортлă карапĕсемпе вак-тĕвек суднисене шыва чылай путарнă. Çакăн хыççăнах полк самолечĕсем Двинск хули патнелле куçса пыракан нимĕç танкĕсен колонни çине пырса тапăннă. Фашистсем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе истребительсем кăларса ярса, урса кайсах пире хирĕç тăнă пулин те, пирĕн летчиксем хăйсен боевой сулĕнчен аяккалла пăрăнман. Нимĕç çăханĕсем сывлăшран пырса тапăннисене вĕсем паттăррăн сире-сире янă. Совет пилочĕсем тĕл пăрахнă бомбăсем тăшман танкĕсене çапа-çапа аркатнă. Двинск çывăхĕнче пулса иртнĕ сывлăшри çапăçура стрелок-радистсем Кудряшов, Белов, Травнин, Кузин т. ыт. юлташсем фашистсен «Мессершмитт-109» йышши истребителĕсене вунпиллĕк ытла персе ÿкернĕ.

Çак çапăçурах летчик Петр Игнашов отечественнăй аслă вăрçă историйĕнчи чи пирвайхи хут хăйĕн бомбардировщикĕпе тăшманăн самолетне пырса çапнă. Вăл пĕччененех нимĕçсен виçĕ хура çăханне хирĕç çапăçу пуçласа янă. Вăйсем тан мар пулнă. Тăшман самолечĕсем Игнашов машинине персе амантса вут хыптарнă. Паттăр летчик хăйĕн çунакан машинипе тÿрех тăшман истребителĕ çине пырса çапăннă та, вĕсем иккĕшĕ те çĕре персе аннă. Çапла вара совет халăхĕн шанчăклă ывăлĕ Петр Игнашов юлашки юн тумламĕ юлмиччenех тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнă.

Çапăçура иртгернĕ кашни кун, кашни çĕнĕ вĕçев летчиксен вăй-халне çирĕплетет, вĕсене вăрçă искусствин опычĕсемпе пуянлатать, çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем парать. Гвардеец-морякcем тăшманăн пайтах карапĕсене путарнă, йывăр артиллерине аркатнă, фашистсен танкĕсене пĕтерсе тăкнă, аэродромсенче тăшман самолечĕсене вут хыптарахыптара янă.

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ефремов эскадрильи тинĕсре тăшманăн транспорчĕсене шыраса тупса пĕтерсе тăкма приказ илнĕ пулнă. Бомбардировщиксем çыран çывăхĕ урлă вĕçсе каçса кайнă. Тинĕс пуш-пушах. Заданире кăтартнă вырăнта тăшман курăнмасть. Командир тăшмана шырама кайма решени йышăнать. Тинĕс çинчи района тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă хыççăн тинĕс вăрă-хурахĕсем хăйсен аллинчи шывсенче пытанса ларнине пĕлет вăл.

— «Юрать, эпир сире хăвăр патăрта та шыраса тупăпăр», — тесе шут тăвать Ефремов. — Штурман, курс — Н. хули çине!

— Есть, курс Н. хули çине!

Командир летчиксене пухса пĕр çирĕп чăмăр тăвать те вĕсене нимĕçсен тинĕс çинчи çар бази патнелле ертсе каять.

Тинĕс çинче тĕтре йăсăрланать, çÿлте йывăр пĕлĕтсем капланса тулнă. Эскадрилья çав хулăм пĕлĕтсене шăтарса тухать те объект çинелле çул тытать. Бомбардировщиксем тылран тăшман порчĕ çине вĕçсе тухаççĕ. Хурал карапĕсем, шаландăсем, транспортсем порт хÿми çумне лăпчăннă. Командир боевой курс çине çул тытать. Унăн хастар юлташĕсем те хыçранах пыраççĕ. Бомбăсем шăп та шай тĕл ÿксе тăшман карапĕсене аркатаççĕ, вĕсене вут тивертсе çунтараççĕ.

Кĕтмен çĕртен çитсе çапнинчен кăштах сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн тăшман хăйĕн зениткисенчен пеме тытăннă. Анчах пирĕн летчиксем тахçанах пĕлĕтсем хушшине кĕрсе куçран çухалнă.

1-мĕш гвардейски полкăн летчикĕсемпе штурманĕсем, хăйсен командирĕ, Совет Союзĕн Геройĕ полковник Преображенский ертсе пынипе, Германи столици Берлин çине тата противникăн инçетри тылĕ çине бомбардировщиксемпе вĕçсе кайса бомбăсем пăрахма çул уçнă. Нумаях та пулмасть Совет Союз Геройĕн капитан Плотникăн летчикĕсем, каçсерен темиçе хутчен те тăшманăн пысăк аэродромĕсем çине вĕçсе кайса, фашистсен пысăк чаçĕсен икĕ штабне аркатнă, темиçе кĕперпе коммуникациллĕ сооруженисене пĕтерсе тăкнă. Ку çапăçусенче коммунист-летчиксем: Окин, Дроздов, Бабушкин, Борзов юлташсем, штурман Шевцов т. ыт. юлташсем уйрăмăнах мала тухнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçăн сур çулĕ хушшинче 1-мĕш гвардейски миннo-торпеднăй авиационнăй полк Германин инçетре вырнаçса тăракан пысăк базисем çине çĕр хут ытла вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă. Тăватă уйăх хушшинче кăна тăшманăн объекчĕсем çине тĕрлĕ калибрлă бомбăсем 13.000 ытла пăрахнă. Полкăн личнăй составĕн çапăçури ăста ĕçĕсене правительство тивĕçлипех хакларĕ: летчиксене, штурмансене, техниксене, стрелок-радистсене, пĕтĕмпе 100 çынна, орденсемпе наградăларĕ, вĕсенчен чи паттăррисене, чи харсăррисене Совет Союзĕн Геройĕсен ятне пачĕ.

Хăйсен чаçĕнчен гвардейски часть тунине полкăн личнăй составĕ пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕ. Çак пысăк хисепе вĕсем çитес çапăçусенче татах та ытларах мухтава кăларĕç.

Бригаднăй комиссар
АЛЕКСАНДРОВ.

ОБОРОНА ФОНДНЕ

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм» колхоз членĕ 68 çулти С. Евграфов 1941 çулта колхоз уйхирĕнче ĕçлесе 250 ĕçкунĕ турĕ. Ĕçкунĕсем тăрăх вăл 70 пăт тĕштырă илет. Ĕç паттăрĕн С. Евграфовăн ывăлĕ фронтра тăшмана хирĕç кĕрешет. С. Евграфов юлташ оборона фондне 50 тенкĕ укçа тата 5 ĕçкунĕ çине тивекен тупăша пачĕ. **М. МИХАЙЛОВ.**

* * *

СОВЕТСКОЕ. Салугинăри пуçламĕш шкулта вĕренекен пионерсемпе октябреноксем Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсем валли 55 чăх, 20 кăвакал, 15 хур тăрантарса çитĕнтерме тытăнчĕç.

Е. ИВАНОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе татах та вăйлатар

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри ĕççыннисем отечественнăй вăрçă фрончĕсенче Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен çарĕ çине вăйлăн наступлени туса пынине тимлĕн сăнаса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем тунă кашни çĕнтерÿ ĕççыннисене татах та лайăхрах, тимлĕрех ĕçлеме хавхалантарать. Çав çĕнтерÿсене вунăпар хут ÿстерме халăх куллен-хи ĕçпе тата укçа-тенкĕпе, ăшă тумтирсемпе пулăшса тăрать.

Ăшă япаласем йышăнакан комисси районри складне кашни кунах çĕнĕ япаласем килсе тăраççĕ. Çак кунсенче Сĕнтĕрвăрринчи «Социализм» артельре ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене татах 5 çĕлĕк, ваткăллă 2 курткăпа шалавар, 5 мăшăр кĕпе-йĕм, 2 фуфайка пухса пачĕç.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç ытти колхозсенче те активлăн пырать. Çак кунсенче «Коминтерн» колхозран районри склада çĕнĕрен 25 тир, 5 килограмм çăм леçсе панă. Ку колхозра ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе суйланă комисси членĕсем Н. Лукин тата С. Таланцева комсомолецсем лайăх ĕçлеççĕ. «Наука Ленина» колхоз членĕсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕнĕрен 19 тир, 30 килограмм çăм, алшишсемпе носкисем пухса панă. Ăшă япаласем пухас ĕçе Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те активлăн хутшăнаççĕ.

Анчах хăшпĕр ялсовет тата колхоз руководителĕсем çак ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ, ăшă япаласем пухас ĕçĕн пĕлтерĕшне ĕççыннисене ăнлантарса памаççĕ. Тĕслĕхрен, «Красноармеец» колхоз председателĕ Кадыков юлташ çав енĕпе нимĕн те туман. Кунта ăшă тумтирсем пухма пуçламан та. Çавăн пекех «Шордан», Ворошилов тата Чапаев ячĕсемпе тăракан колхозсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса паман.

А. РАЗИН.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Пирĕн халăх Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшать. Хăйĕн тăван çарне пулăшас ĕçе вăл куллен кун вăйлатса пырать. В. М. Молотов юлташăн «Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарнин çинчен тата тискер кайăкла çавтери хăрушă ĕçсем туни çинчен» пĕлтерсе каланă ноти ĕççыннисен фашизма хирĕç çĕкленнĕ курайманлăхне татах та ытларах вăйлатрĕ. Хаяр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешÿре совет халăхĕ большевиксен партийĕпе хăйĕн правительстви тавра татах та çирĕпрех пĕтĕçсе тăрать, хăйĕн вăйне çынçăн фашизма пуçĕпех çапса аркатас ĕçе парать.

Нумай колхозсенче ăшă тумтирсем пухасси çĕнĕрен пуçланса кайрĕ. Мартынкино ялсоветĕнчи ĕççыннисем çак кунсенче çĕнĕрен 80 тир, 3 килограмм çăм, 2 мăшăр перчатка, пĕр мăшăр çăматă тата ытти япаласем пухнă. «Красный восток» колхоз счетоводĕ Кожевников 800 грамм çăм, «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ Кузьмина пĕр мăшăр çăматă панă. Çавăн пекех Красноармейски ялсоветĕнчи «Победа» колхоз членĕсем те пĕр кун хушшинче 22 тир, 2 мăшăр алшиш, 5 мăшăр çăм носки пухнă.

Ăшă тумтирсем пухасси пур колхозсенче те малалла сарăлса пырать.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Халăх çилли

1.

Информаци чĕлхи—кĕске чĕлхе. Эпир хаçатсенче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Молотов юлташăн нотине вуласа тухнă хыççăн нимĕç оккупанчĕсем пирĕн тăван çĕршывра сăмахпа каласа пама çук ирсĕр те тискер ĕçсем тунине пĕлтĕмĕр. Çав тискерлĕхсем çинчен пире фактсем пĕлтернĕ пек çеç пĕлтерчĕç. Анчах çав фактсем вĕсем халăх чĕринчен темĕн чухлĕ çилĕ çуратса кăлараççĕ.

Хаçат пире кĕскен кăна пĕлтерет:

«...Красная Поляна районĕнчи Белый Раст ялĕнче пĕр ушкăн ÿсĕр нимĕç салтакĕсем вуникĕ çулхи Володя Ткачева крыльца çине мишень вырăнне кăларса тăратнă та ăна автоматсенчен персе шăлт ала пек шăтăклантарса пĕтернĕ.

...Смоленск облаçĕнчи Колпино ялĕнче оккупантсем хресченсене пурне те Германи чаçĕсем валли кĕперсемпе блиндажсем тума хăваласа илсе кайнă. Строительство пĕтнĕ хыççăн вĕсене пурне те персе вĕлернĕ.

...Орел облаçĕнчи Злобино ялсоветĕнче фашистсем, макăрса хăйсене çывăрма чăрмантарнăшăн, колхозник Кратовăн пĕчĕкçĕ ачине персе вĕлернĕ...»

Çак фактсене вулатпăр та эпир, пирĕн чĕрере вут пек вĕри çилĕ çĕкленсе тухать. Пирĕн чышкăсем хаяррăн чăмăртанаççĕ, ÿтри юн тавăру вучĕпе çунса вĕреме тытăнать.

Анчах хаяр çилĕсĕр пуçне мĕн чухлĕ хуйхă-суйхă, мĕн чухлĕ вĕри куççуль çуратса кăлараççĕ пуль çак тискер фактсем пирĕн совет çыннисен чĕрисенчен? Тискер фашистсен ирсĕр аллисенчен вилнĕ мĕскĕнсен кашнин тăванĕсем, юлташĕсем, пĕлĕшĕ-тантăшĕсем, тусĕ-йышĕсем пур. Мĕн тери пысăк хуйхă, мĕн тери пысăк çухату вĕсемшĕн хăйсен чи çывăх, чи юратнă çынни тискер вилĕмпе асапланса вилни? Мĕнле çунмасăр чăтса тăтăр вĕсен чĕри, мĕнле куççулленмĕç вĕсен куçĕсем? Вĕсен чи çывăх çыннин вăхăтсăр таталнă хаклă пурнăçне нимĕнпе те тавăрма çук, анчах тăшман пирĕн халăхăн хаяр тавăрунчен ниçта та тарса пытанаймĕ.

Эпир тавăрăпăр! Хамăр тăвансен таса юнĕн кашни тумламĕшĕн, нимĕç ури таптаса хăртнă кашни чечекшĕн тавăрăпăр!

2.

«Пĕтĕм халăхпа тÿссе ирттернĕ хуйхă—хуйхă мар, мухтав!»—тет халăх сăмахĕ. Чăваш ялĕсем тăрăх çÿренĕ чух эпĕ çак сăмаха час-часах илтетĕп.

Синер ялĕнче эпĕ фронтран халь кăна аманса таврăннă Назар Григорьев патĕнче пултăм. Вăл, яштака кĕлеткеллĕ, тап-таса пит-куçлă, вăтам çулсенчи вăйпитти çамрăк çын, вăрçă вучĕ хыпса тухиччен колхоз тимĕрçи пулса ĕçленĕ. Ирĕклĕ ĕç ăна савăнăç кÿнĕ, пурнăçпа пуянлăх панă, хăйĕн пурнăçне тата пуянтарах та культурăллăрах тума хавхалантарнă. Вăл кăшт тĕттĕмрех тимĕрçĕ лаççинче хĕртнĕ тимĕртен çап-çут хĕлхемсем сирпĕтсе юрла-юрла ĕçленĕ. Ун чух ĕç çи вăхăчĕ пулнă та, Назар Григорьев, лаçран тухма пĕлмесĕр, ялхуçалăх машинисене тÿрлетсе тĕрмешнĕ. Шăп çак вăхăтра пирĕн тăван çĕршыв çинче тăшманăн етрисем шартлатса çурăлма пуçланă. Назарăн шутласа тăма вăхăт пулман: вăл çавăнтах лаççине юлташ аллине парса хăварнă та хăй фронта тухса кайнă.

— Ан йĕрĕр, ан кулянăр, ан хуçăлăр, ман аллăмсем тĕреклĕ, тимĕр шаккаса тĕреклennĕ. Тăшмана та нимĕн хĕрхенмесĕрех шаккăп эпĕ çав алăсемпе,—тесе çеç лăплантарса хăварнă вăл хăйĕн çемьине—амăшне, арăмне, вуникĕ çулти хĕрачине. Анчах вăрçăра тăшмана çĕнтеричченех çапăçма май килмен Назарăн. Наступление кĕнĕ вăхăтра окоп чавнă чух пĕр ухмах пуля унăн сулахай аллине пырса тивнĕ те шăмă витĕрех шăтарса тухса кайнă.

Халь Назар патне кашни каç темĕн чухлĕ халăх пуçтарăнать. Пурте вĕсем Назартан фронт çинчен, вăрçă ĕçĕсем çинчен ыйтса пĕлесшĕн. Анчах Назар ытлашшипех сăмахлама юратмасть, кĕскен кăна калать:

— Нимĕншĕн те мар, фашистсене ытларах çĕмĕрме май килменнишĕн çеç пăшăрханатăп. Çав ирсĕр нимĕçсем вĕлернĕ ман аттене 1914 çулта, вăрçăра. Тавăраймарăм—пурĕ те вун-вуникĕ нимĕçе çеç ÿпĕнтертĕм...

Назарăн ашшĕ империализм вăрçинче пĕтнĕ. Вĕсене, тăлăха тăрса юлнă виçĕ пĕчĕкçĕ ачапа, амăшĕ ÿстернĕ. Халĕ, çав тăлăх ачасем маттуррăн çитĕнсе çитсе кашни харпăрхăй пурнăçĕпе тулăхăн пурăнма пуçласан, вĕсен лăпкă пурнăçне каллех çав ирсĕр нимĕçех килсе хускатнă...

Стена çинчи сехет йĕппи нимĕн систермесĕр куçса пырать. Вăхăт—çурçĕр иртни пĕр сехет. Тулта шартлама сивĕпе кĕрпекленнĕ юр çинче ура сасси кăчăртатни илтĕнет. Унччен те пулмасть, шăнса ларнă пÿрт алăкĕ шартлатса уçăлать те, пÿрте, тĕтĕм пек мăкăрланса явăнакан сивĕ сывлăшпа пĕрле, пĕр хĕрарăм тăватпиллĕк çулхи ачана çавăтса кĕрет. Иккĕшĕ те питĕ тумланнă, пуçĕсем çинченех шел-тутăрсемпе пĕркеннĕ.

Хĕрарăм хăй хыçĕнчен алăка хытă туртса хупрĕ те, сĕтел çине пĕр пысăк котелок пырса лартса, ачине салтăнтарма тытăнчĕ.

— Витькăна калап-ха: юлмасть мур ачи. Пырап та пырап, мучин хĕрлĕ çăлтăрлă калпак пур, тет. Ну, салан хăвăртрах, ачу-пăчу!

Пĕчĕкçĕ Витька хăйне амăшĕ хăваратса тăкнишĕн пĕртте кăмăлсăрланмасть. Вăл çавăнтах «мучăшĕ» патне пырса йăпанма пуçларĕ:

— Мана çав шĕвĕр тăрлă калпак çинчи çăлтăра паратни?..

Назар сĕтел çинчи котелок çине пăхса илчĕ:

— Халь мĕн илсе килтĕн-ха тата, апай?—тесе ыйтрĕ вăл.

— Кăмакана аш яшки лартса хăварнăччĕ те, килсе çитерес терĕм-ха. Хам та анчах таврăнтăм. Пĕччен—ни ĕçлени, ни çини...

Сĕтел çинче аш яшки пăсланать, Назар амăшĕ хăйĕн хуйхи çинчен калаçать:

— Ку шуйттан вăрçине кам шутласа кăларать тульккăш.

— Гитлера пĕтерсе тăксан, нихăçан хинчен те лайăх пурнăç тăвăпăр ак,—тет Назар, амăшĕ çине пăхмасăрах.

— Вăл чунилли Гитлерне—йытă вилĕмĕ хуплатăр! Виçĕ ачама тăлăххăн ÿстерсе çын турăм, вĕсем çине куçăм тулли пăхса савăнса пурăнăп, терĕм. Ак халь Назарĕ—Назарĕ капла пулса таврăнчĕ, Яккăвĕ—Яккăвĕ вăрçăра, Унтрийĕ те унта.

—Ан пăшăрхан, кин, Унтри вăл вилес çук. Хассан патĕнче те вилмен, кунта та вилес çук. Танкистсем вĕсем чăрсăррăн çапăçаççĕ,—а Якку пирки пăхăшлама та кирлĕ мар. Вăл— летчик, часах пĕтес çук,—лăплантарать старикĕсенчен пĕри. Анчах хĕрарăмăн чĕри çемçе, вăл, хăйĕн хуйхине çынна кăтартас мар тесе, чунне темĕн пек хытарать пулсан та, куççульне пытараймасть. Çутă шăрçа пек ярăмланса юхса анакан куççуль тумламĕсене шурă тутăр вĕçĕпе шăла-шăла илет.

— Ан кулян, кин. Сан хуйху çеç мар, пĕтĕм халăх хуйхи халь çавă. Вăрçă — чун таталмасăр пулмасть, тăтса ирттерес пулать,—татах лăплантарать малтанхи старик.

— Эп тата çапла калатăп: халăх куççулĕ — кÿлĕ пулнă, тет, — илтĕнет кĕтесрен тепĕр сасă.

—Çук, апла мар,—пÿлет ăна старик,—халăхпа тÿссе ирттернĕ хуйхă—хуйхă çеç мар, мухтав та!

— Ан йĕр, апай. Эпир чăтăпăр, тÿсĕпĕр, пурне те тÿссе ирттерĕпĕр. Анчах тăшмана нихăçан та каçару пулмĕ. Нихăçан та!—тавăрать сылтăм чышкине чăмăртаса Назар Григорьев.

3.

Мăн Тукташ ялĕнче эпĕ кĕске срокласа киле таврăннă летчика Александр Куприянова тĕл пултăм. Çар специальноçĕ унăн — стрелок-радист. Вăл пайтах хĕрÿллĕ çапăçусенче пулнă. Мускав патĕнчи пĕр çапăçура тăшман пулемечĕн вут-хĕмĕ ун пуçĕнчи шлемĕн кĕсьеркине татса кайнă, парашютне çичĕ çĕртен пуля шăтарса тухнă, çапах та хăй сывах юлнă.

Александр—халь çеç маттур каччă пулса çитнĕ хĕп-хĕрлĕ тулли пит-куçлă, илемлĕ, çирĕп йĕкĕт. Ун пек йĕкĕтсем кирек камшăн та куç тулли, вĕсем çине пăхнăçемĕн пăхас килет. Халĕ çак Александрăн каллех ашшĕ-амăшĕнчен уйăрăлмалла, каллех вăрçа — вут ăшне кĕмелле, тен, вилмелле те пулĕ... Александр вилĕме кĕтмест. Вăл, пурнăçа юратнă пирки, хăйĕн пуçне хĕрхенмесĕрех, çав вилĕме хирĕç çапăçма тухса каять.

Александра ăсатма пÿрт тулли халăх пуçтарăнчĕ. Пурте хумханаççĕ, пăшăрханаççĕ. Александра ыра сунаççĕ. Александр лăпках. Вăл ни хумханмасть, ни пăлханмасть.

— Мĕн çак эсир, çемçешке чунлă çынсем! Вилме каймастпăр вĕт,—лăплантарать вăл ăсатма пухăннă çынсене çемçе, йăваш сасăпа. Ку сăмахсем Александр ашшĕн чăтăмлăхне, граждăн вăрçинче хăрах урине çухатса хăварнă инвалидăн кăмăлне те хускатрĕç.

— Чăн, хăй каларĕшле, пирĕн анчах мар-çке. Пĕтĕм халăхпа... Лăплан, амăшĕ, вăрçа каякан çын пурте вилмест,—терĕ вăл, чунне хытарса.

4.

Пирĕн халăх хуйха лăплантарас тесе йĕмест, унăн куççулĕ—чи çывăх çынсемшĕн, чĕре патĕнчен тухма пĕлмен çынсемшĕн тăканать. Чи хаклă çынсен пурнăçĕпе вилĕмĕшĕн тăканать çав хаклă куççуль. Вăл куççулĕн кашни тумламĕ ахах-мерченрен те хаклăрах. Унăн пĕр тумламĕ те ахаль çухалмĕ. Çук, халăх куççульне нимĕнле истори хăйарĕ те çăтса яраймĕ, мĕншĕн тесен вăл хаяр çилĕ, тавăру çилли çуратса кăларать. Эпир тавăрăпăр! Вараланчăк урапа килсе таптанă çĕршывшăн, çапăçура паттăррăн вилнĕ геройсен юнĕшĕн, ирсĕр фашистсем асаплантарса вĕлернĕ юлташсен вăхăтсăр таталнă пурнăçĕшĕн,—пуриншĕн те тавăрăпăр. Чĕре тепле ыратсан та, чун тем тери хурлансан та, эпир тÿсĕпĕр. Эпир тавăрăпăр, хаяр та нимĕн каçарусăр тавăрăпăр, пĕтĕм халăх çиллипе тавăрăпăр.

Юн чĕнет, çĕршыв чĕнет çапла тумашкăн!

Эпир тăшмана çапса аркататпăр. Унăн шăммисене çĕр хурчĕсем кышлĕç. Вăрçă чарăнĕ. Тар шăрши йăлтах сирĕлĕ. Тен, пирĕн хушăмăрта ухсах-чăлахсем те тăлăх-туратсем те пулĕç. Анчах çапăçура пуçа хунă паттăрсене халăх нихăçан та манмĕ. Вĕсен тăпри çинчи чечексем ĕмĕр-ĕмĕрех вут пек йăлкăшса çунĕç.

ИЛЬЯ ТУКТАШ.

Финанс работникĕсен ăмăртăвĕ

СĔРПУ. Районри финанс работникĕсем отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче укçа-тенкĕ пухас плана вăхăтра тултарса пырассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем январĕн 1-мĕш тĕлне 1941 çулти укçа-тенкĕ пухмалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕç.

Районри финанс пайĕ çак кунсенче финанс работникĕсене пухса канашлу туса ирттерчĕ. Канашлура финанс работникĕсем 1941 çулта укçа-тенкĕ пухмалли плана тултарни тата финанс работникĕсен 1942 çулти задачисем çинчен сӳтсе-яврĕç. Налог агенчĕсемпе инспекторĕсем, ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса пырса, 1-мĕш кварталта пухмалли культсбор укçине февраль уйăхĕнче пухса çитерме обязательство илчĕç.

Финанс работникĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна вăхăтра пурнăçлассишĕн мĕнпур вăйпа ĕçлеççĕ, ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн йĕркелесе пыраççĕ. Вырăнти Советсен çак кунсенче пулса иртнĕ сессийĕсенче финанс работникĕсем 1941 çулти бюджета мĕнле пурнăçлани тата çĕнĕ бюджета çирĕплетесси çинчен докладсем туса пачĕç.

Финанс работникĕсем çĕнĕ çулта çĕнĕлле ĕçлесе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Чурачăк ялсоветĕнчи налог агенчĕ Петров юлташ культсбор укçине срокченех 2 пин тенкĕ пухса пачĕ. Çавăн пекех Кăшаркасси ялсоветĕнчи налог агенчĕ Ефимов юлташ та культсбор укçине 1.500 тенкĕ, Пĕкĕрвар ялсоветĕнчи налог агенчĕ Иванов юлташ пин тенкĕ пухрĕç.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.
Райфо заведующийĕ.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçре юлса пынине тӳсме çук

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корреспонденчĕ). Районри малта пыракан ялсоветсем 1941 çулти IV-мĕш кварталти финанс планне ăнăçлăн тултарчĕç. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Асхвапа Мăкăр ялсовечĕсем лайăх ĕçлерĕç. Ку ялсоветсенчи исполком председателĕсем Швецовăпа Антонов юлташсем, финагентсем Сергеевпа Семенов юлташсем укçа-тенкĕ пухас ĕçе ялти йышлă актива явăçтарнă. Мăкăрти «Канаш» колхоз счетовочĕ Павлов юлташ заем укçине кĕске вăхăтрах пухса çитернĕ.

Юлашки вăхăтра Катек ялсовечĕ те укçа-тенкĕ пухас енĕпе хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. III-мĕш кварталра вăл юлса пынă пулсан, IV-мĕш квартал планне срокчен тултарчĕ. Ялсовет председателĕ Дмитриевпа финагент Кадыков юлташсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе куллен ĕçлеççĕ.

Анчах районра финанс ĕçĕнче юлса пыракан ялсоветсем те чылай-ха. Ача ялсовечĕ IV-мĕш кварталти финанс планне 76 процент, Сухайкасси ялсовечĕ 78 процент, Вăрманпуç ялсовечĕ 83 процент çеç тултарнă. Кунти ялсоветсемпе колхоз председателĕсем, финагентсемпе комсомол членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене тума ытларах пикенсе, укçа-тенкĕ пухас ĕç çине çителĕксĕр çаврăнса пăхман.

1942 çулти январĕн 7-мĕш тĕлне пурĕ 14 колхозра кăна заем укçине пухса çитернĕ. Йалмачкари «1-ое Мая», Сикассинчи «Новая жизнь» колхозсенче заем укçине пухас ĕç питех те ... пырать. Канашри Тельман ячĕпе тăракан колхозра заем укçине пĕр ... та пухман. Карăклă ялсоветĕнчи колхозсенче те ку ĕçе тытăнманпа пĕрех.

Заем укçи пухасси çапла юлса пынине, районри финанс пайĕ çак ĕçе сӳрĕк ертсе пынинчен килет. Çавна пула чылай çĕрти финагентсемпе комсод членĕсем заем укçине пухас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ.

Халĕ, пур енĕпе те фронта пулăшмалла чухне, укçа-тенкĕ пухас ĕçре юлса пынине чăтма çук. Районри финанс пайĕ финагентсемпе комсодсене ... ертсе пырса, ялти актив вăйĕпе усă курса, укçа-тенкĕ пухас ĕçре юлса пынине пĕтерме тивĕç. Райсовет исполкомĕ енчен финанс органĕн ĕçне тăлăшах тĕрĕслесе тăмалли кирлĕ.

Т. ИВАНОВ.

Заем укçине срокчен тӳлесе татаççĕ

ВĂРНАР. Районри колхозсем тылайĕпĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемĕн укçине срокчен тӳлесе татрĕç. Январь уйăхĕн 10-мĕш тĕлне 32 колхоз заем укçине тӳлесе татнă.

Тĕмпекри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра В. Быков юлташ 6—7 çул хушши ĕнтĕ заем уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса туса пырать. Государство умĕнчи укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен тӳлесе татни нимĕç захватчикĕсене çапса аркатас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшнине колхозникĕсене тĕплĕн ăнлантарса парать. Çак колхоз халĕ заем укçине срокченех тӳлесе татрĕ.

Юлашки кунсенче Сендимиркинăйра «Гигант», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем те заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерчĕç.

В. МАКСИМОВ.

Производствăра ӳсекен çынсем

Партин Сĕнтĕрвăрри судоверфĕнчи пуçламĕш организацийĕ производство ĕçĕпе куллен интересленет. Коммунистсен пухăвĕсенче производство ыйтăвĕсене тăтăшах сӳтсе-яваççĕ, производство программине пурнăçлас ĕçе пуçарса пыраççĕ. Судоверфь директорĕ коммунист Жилочкин юлташ производствăна тимлĕн ертсе пырать, кашни ĕçпе интересленет. Парти организацийĕ производство администрацийĕпе тачăн çыхăнса, пĕрле ĕçлесе пынипе, судоверфь коллективĕ хăйĕн 1941 çулти производствăллă планне ăнăçлăн пурнăçларĕ, çĕршыва паха продукци пачĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа заводри ĕç тухăçлăхĕ 18 процент ӳсрĕ. 1941 çулăн юлашки çурçулĕнче çул пуçламĕшĕнчи уйăхсенче кăларнинчен 14 процент ытларах продукци туса кăларнă.

Производствăра çĕнĕ стахановецсем, двухсотниксем çитĕнчĕç. Рабочисем — Ф. Краличкин тимĕрçĕ тата ыттисем те ĕç нормине яланах 200 процент ытла тултарса ĕçлеççĕ. Л. Староверов, Н. Винокуров, Н. Гордеев юлташсем 1941 çулти декабрь уйăхĕнчи плана 150—180 процент тултарчĕç. 8 хĕрарăмран тăракан бригада вăрçă пуçланнăранпа производство планне тăтăшах 170 процент таран пурнăçласа пырать. Ку бригадăри работницăсем Тулычкина, Яковлева, Пьяночкина тата ытти юлташсем те кашни кун ĕç нормине 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Заводра кадрсем хатĕрлес ĕç лайăх пулса пырать. Мастерсемпе цех начальникĕсем рабочисене ĕçре вĕрентсе, кашни детале мĕнле лайăхрах тумаллине ăнлантарса параççĕ. Стахановец-рабочисем çамрăк рабочисене вĕрентеççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа çавăн пек ĕçленипе 14 çамрăк квалификаци илсе, хăйсем тĕллĕн ĕçлеме пуçларĕç. Стахановец Н. Уткин хăйĕн ĕçне Новиков юлташа вĕрентрĕ, стахановец Долгов — Ильин юлташа, М. Харитонов — Хлебнов юлташа хăйсен специальноçĕсене вĕрентрĕç. Мастер Шевнин юлташ тата ытти чылай рабочисем те, завода хăйсен ывăлĕсене илсе пырса, тĕрлĕрен специальноçсемпе ĕçлеме хăнăхтарчĕç. Çав çамрăксенчен нумайĕшĕсем халĕ хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Тĕслĕхрен Н. Красильников, Мардов, Ильин юлташсем ĕç нормине 150-шар процент ытла тултарса ĕçлеççĕ.

Фронта кайнă рабочисем вырăнне ĕçе хĕрарăмсем тăчĕç. Çапла фронта кайнă коммунист Александров вырăнне Салмина юлташ тăчĕ. Вăл халĕ вăрман завочĕн начальникĕ пулса ĕçлет, ĕçе лайăх йĕркелесе пырать. Анна Лебедева тимĕрçĕ пулса ĕçлеме тăчĕ, вăл ĕç нормине куллен 145 процент тултарса ĕçлет.

Мастерсемпе рабочисем ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ӳстерессишĕн куллен тăрăшаççĕ. Рационализаторла сĕнӳсем параççĕ. Цех начальникĕ Н. Шевнин юлташ панă рационализаторла сĕнӳ производство ĕçне лайăхлатса, рабочисен ĕçне çăмăллатрĕ, хăвăрт ĕçлеме пулăшрĕ. Унăн сĕнĕвĕ оборонăллă заказа срокчен пурнăçлама тата завод укçине перекетлесе хăварма май пачĕ.

Иртнĕ çулти ĕçсен малтанхи итогĕсене пăхса тухнипе пĕрлех, судоверфьре ĕçлекен рабочисем пурте пĕр шухăшлăн пулса, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăн 2 уйăхри программине пурнăçланипе кĕтсе илме сăмах пачĕç. Кашни рабочи хăйĕн кулленхи нормине 100—200-шер процент тултарса ĕçлеме, çак вăхăтра тĕрлĕ специальноçсене татах та тепĕр 15 çамрăка вĕрентсе квалификаци пама пулчĕç.

Парти организацийĕ производство ĕçĕнчи чи лайăх рабочисене, хăйсен пĕтĕм вăйне хурса фронта пулăшассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен стахановецсене хăйĕн ретне илчĕ, пултарулла рабочисен ĕçне сăнаса тăнипе вĕсене ответлăрах ĕçсене вăхăтра куçарса пырать.

Стахановец Александров юлташ ĕçре рабочирен вăрман завочĕн начальникне çити ӳсрĕ. Çавăн пекех Красильников юлташ та ĕçре ӳссе пырать. Вĕсем ВКП(б) кандидачĕсен ретне тăма тивĕçлĕ пулчĕç. Александров юлташ хăйне парти кандидачĕсен ретне илнине ĕçпе çирĕплетрĕ. Партипе правительство чĕннипе вăл Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕ. Вăл халĕ тăван çĕршывшăн нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешет.

Г. РЯБИН.

Вăрман хатĕрлевĕнчи лайăх тĕслĕхсем

Шупашкар вăрманпромхозĕн Сосновкăри вăрманпунктĕнчи рабочисем пысăк ăнăçлăхпа ĕçлеççĕ. Малта пыракан стахановецсем Бохтулов, Григорьев юлташсем куллен нормăна 200-шер процент тултарса пыраççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн вĕсене декабрь уйăхĕнче 140-шер тенкĕ преми шучĕпе хушса тӳленĕ. 56 çулти рабочи Сметанин юлташ декабрь уйăхĕнчи задание 200 процент ытла тултарса, 150 тенкĕ премия илчĕ.

Вут-шанкă хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ Г. Фомин юлташ фронта тухса кайрĕ. Ун вырăнне унăн шăллĕ Ф. Фомин тăчĕ. Ф. Фомин юлташ пиччĕшне фронта ăсатнă чух çапла каларĕ:

— Фашистсен çĕлен-калтисене Чапаев пек ним шеллемесĕр çĕмĕр. Эпĕ кунта, фронта пулăшма пур вăйпа тăрăшса, 2—3 норма тултарса пырăп,—терĕ.

Ф. Фомин юлташ хăйĕн сăмахĕсене ĕçре пурнăçа кĕртет. Унăн бригади, декабрь уйăхĕнчи плана 2,5 хут ытла тултарса, 1160 тенкĕ премия илчĕ. Халĕ ку бригада куллен 3-шер норма тултарса ĕçлет.

Юлашки кунсенче вăрманпунктĕнчи рабочисем, Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автозаводри çамрăксемпе комсомолецсен чĕнĕвне сӳтсе-явса, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне пĕрремĕш квартал планне тултарма обязательство илчĕç. Халĕ вĕсем илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ. Вутă турттаракан стахановецсем Бохтулов, Сметанин, Григорьев тата ытти юлташсем те хатĕрленĕ вутта палăртнă пункта куллен 6-шар лав турттарнă пулсан, халĕ вĕсем куллен 10-шар лав турттараççĕ.

М. С.

Лаша кӳлмелли кивелнĕ хатĕрсене юсаççĕ

Чăвашпотребсоюз çуракине хатĕрленмелли планра лаша кӳлмелли кивелнĕ хатĕрсене юсас ĕçе организацилеме палăртнă. Лаша кӳлмелли кивелнĕ хатĕрсене (сӳсмен, йĕнерчĕк, кутлăх т. ыт. те) колхозсенчен ялти кооперативсем урлă илеççĕ. Çав япаласене юсанă хыççăн пурне те ялти кооперативсем урлă колхозсене сутаççĕ.

В. СЕМЕНОВ.

ÇАР ĔÇНЕ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА

Всевобуч боецĕсен хĕл çинчен мĕн пĕлмелле

I. ТĂМ ИЛЕСРЕН СЫХЛАНАССИ

Вырăс çынни çил-тăманлă сивĕ хĕлрен хăрамасть. Хĕллехи сивĕре—кашни çамрăк, тет вырăссен авалхи пословици...

Тăшмансене, юхăнкуçлă захватчиксене аркатса тăкма хĕл пĕрре кăна мар пулăшнă вырăс халăхне.

Вырăс çынни сивĕ хĕле пĕчĕкренех хăнăхса ӳсет, пиçĕхсе çитет. Анчах çавăнпа вăл сивĕсенчен хăрамасть, тени çавах та тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ: вăл тăм илесрен сыхланма та пĕлет.

Пурте пĕлеççĕ: ытлашши сивĕ мар çанталăкра та тăм илет. Тăм илесси çилрен те, чĕрĕ сывлăшран та, çанталăк сасартăк улшăннинчен те килме пултарать.

Всевобучăн кашни боецĕ—вăл хирĕк ăçта вĕренет пулсан та—тăм илессинчен мĕнле сыхланмаллине пĕлме тивĕçлĕ.

Чи малтан ал-урасене, çи-пуçа тăп-тăп тăхăнас пулать. Атă-пушмак е çăматă тăвăр пулсан, ура та часах шănать. Çавăнпа урана тăхăнмалли япаласене ирĕкреххине, ик хут тăлапа тăхăнма юрăхлине тупма тăрăшмалла. Пĕррремĕш тăли хыççăн урана хаçатпа чăркас пулать, вара тин иккĕмĕш хутне сырмалла.

Ура тăлисене яланах типĕтес пулать. Нӳрĕ тăлапа урана часах тăм илме пултарать.

Обмоткăсемпе пушмак кантрисене пушăрах çыхмалла. Ытлашши хытă пăкса лартни юна çӳреме чăрмантарать, урана шăнтса тăм илтерме пултарать.

Атă-пушмаксене куллененех мазь сĕрмелле, тăхăнас умĕн тĕпне улăм, кĕççе е пĕр-пĕр сукно татăкĕ хумалла. Май пур чухне ăна типĕтсех тăрас пулать (улăм пулсан—улăштармалла).

Çавнашкалах пуçа тăхăнмалли япаласене те юрăхлисене тупма тăрăшмалла. Пите тăм илесрен шлема тата çĕлĕкĕн хăлхисене антармалла.

Уте сĕрмелли мазьсемпе е çусемпе çапла усă курас пулать: чи малтан питри усă вырăнсене—питçăмартисене, сăмсана, янаха, унтан алă тунисене, ура тупанĕсене (пуринчен ытла—пӳрнесене) сĕрмелле. Мазьне типиччен сăтăрма юрамасть, ăна çӳхе сий пит çине те хăвармалла (анчах куçа кĕресрен сыхланас пулать). Алă тунисемпе ура тупанĕсене ытларах та сĕрме юрать.

Походра чух, çиле хирĕç каймалла пулсан, командир хушнă тăрăх вырăнсене улăштарма пулать: малти ретре пыраканнисем колоннăн варрине куçарĕ, флангрисем—шеренгăн варрине.

Кашни боецăнах хăйĕн тумтирĕ е пăшал-пулеменчĕ тавраш хачи тимĕр чăçсем çара ӳте лексе тăрасран сыхланмалла.

Тăм илесрен вăхăтран вăхăта алă тата ура пӳрнисене хускатни те, пите сăтăрни те авăн пулăшать.

Нӳрлĕ, çĕтĕк перчаткăсемпе алшишсем те пӳрнесемпе алă тӳрчĕсене тăм илтерме пултараççĕ. Çавăнпа перчаткăсене, алшишсене яланах типĕ тытмалла. Вĕсем çемçе тата ăшă пулмалла.

Уте тăм илме пуçланине алăпа ура пӳрнисем, пит-куç йĕп пек чиксе ыратма пуçланинчен е туйми пулнинчен, тăм илнĕ вырăн шурса кайнинчен пĕлме пулать. Походсенче çак паллăсем курăнасса сăнасах пымалла. Тăм илнĕ вырăнсем палăрсанах шурса кайнă вырăнсене хĕрлĕ сăн çапиччен е туйма пуçличчен сăтăрмалла.

Уте тăм илесрен йĕлтĕрпе тăтăшах çӳрени те пулăшать: вăл ӳт-пĕве çирĕплетет, пит-куçа, алă-урасене сивве хăнăхтарать.

II. ЙĔЛТĔРÇĔСЕН МĔН ПĔЛМЕЛЛЕ

Йĕлтĕрçĕ-боец, йĕлтĕрлĕ маршра (походра) хатĕрленнĕ май, çӳлте асăннисĕр пуçне тата çаксене те асра тытмалла:

Çи-пуçа, çар хатĕрĕсене лайăх майлаштарса тăхăнмасан, кирлĕ пек йĕркелесе çыхмасан, ӳт-пире шăйăрма пултарать, упма чăрмантарать, час ĕшентерет.

Йĕлтĕрлĕ маршра хатĕрленнĕ май, атă-пушмак, çăматă, çири тумтир тата çар хатĕрĕсем мĕнле вырнаçтарса тăнине асăрхамалла. Тумланас умĕн урасене тĕплĕн сăнамалла, вĕсене çуса тасатмалла, чĕрнесене касмалла. Урасем хытă тарлаççĕ пулсан, унта хăпарса тухнă вырăнсем, шăйрăлнисем пулсан, санинструктор е фельдшер патне кайса пăхмалла.

Ура тăлисене якатса тăхăнас пулать: вĕсем анса та ан ларччăр, хутланса та ан тăччăр. Май пулсан похода тухас умĕн ура тăлисене çуса типĕтес пулать.

Похода тухиччен атă-пушмаксене мазьсемпе е çупа сĕрсе хурăр; йĕлтĕрĕн йăллисене тĕрĕслĕр: вĕсем урана тăп-тăп тытса тăччăр, çав вăхăтрах ытлашши пушă та ан пулччăр.

Йĕлтĕрлĕ марш вăхăтĕнче шыв режимне тытма пĕлес пулать. Похода тухас умĕн флягăна лайăх çуса тасатса, таса шыв тултармалла. Марш вăхăтĕнче çул çинче тата малтанхи чарăнусенче шыв ĕçме юрамасть, мĕншĕн тесен ун чух ĕçсе тăранма çук. Питĕ хытă ĕçес килсен, çăварпа пыр тĕпне шывпа чӳхесе илмелле. Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш чарăнусенче флягăн виç пайĕнчен пĕр пайне е çурри таранах ĕçме юрать, ĕçессе пĕчĕккĕн сыпса ĕçмелле, шыва ытларах çăварта тытса тăмалла.

Йĕлтĕрлĕ марш вăхăтĕнче алăпа ура хусканăвĕсемпе килĕштерсе, сăмсапа сывламалла.

Йĕлтĕр патаккисене хытă чăмăртаса тытма юрамасть; хытă тытни алăри юна çӳреме чăрмантарать, пӳрнесене тăм илтерме пултарать.

Канма хӳтĕ вырăнсенче кăна чарăнмалла. Канмă чух ларма та юрать, анчах юр çине ларас пулмасть, хывнă йĕлтĕрсем çине лармалла.

Çакна кашни боецăнах асра тытас пулать: хăйне тăм илесрен сыхласа вăл Хĕрлĕ Çарăн хăватне ӳстерет.

Вырăссен шартлама сивĕ хĕлĕнчен фашистла вăрă-хурахсем чĕтресе тăччăр. Пирĕн совет воинĕсем хĕле кирлĕ пек хатĕрленсе кĕтсе илсе, ăна кĕрешӳри союзница туса хурĕç. Совет çĕршывне килнĕ нимĕç оккупанчĕсене пĕр çын юлмиччен вĕлерсе пĕтерĕç.

Ваттисем те, çамрăккисем те хастарлăн ĕçлеççĕ

КАНАШ. «Коминтерн» колхоз йышлă выльăх-чĕрлĕх усракан пулчĕ. Колхозăн хальхи вăхăтра сĕт-çу, сысна, сурăх тата чăх-чĕп фермисем пур.

Фермăсенче пурĕ 4 çын ĕçлет. 56 çула çитнĕ И. Зайцев юлташ икĕ çул хушши фермăра сыснасемпе сурăхсем пăхса пурăннă. Çав тапхăрта вăл хăйĕн ĕçне яланах тĕплĕн тунă: выльăхсене юратнă, тутă та таса усранă. Лайăх, тăрăшса ĕçленĕшĕн Зайцев юлташа виçĕ уйăх каярах фермăсен заведующине суйласа лартрĕç.

В. Филиппов фермăра 5 çул ытла ĕçлет ĕнтĕ. Вăл обществăллă выльăх-чĕрлĕхшĕн чĕререн тăрăшать, ĕçре ывăнма пĕлмест. 1941 çулта В. Филиппов юлташ 438 ĕçкунĕ тунă. «Выльăхсен сывăх тусĕ», теççĕ колхозниксем ун çинчен. Лайăх ĕçленĕшĕн колхоз правленийĕ Филиппов юлташа çулсеренех премилесе пынă.

Çак ватă колхозниксемпе пĕрле колхоз фермисенче икĕ çамрăк хĕрача: М. Иванова тата А. Федотова дояркăсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем фермăра ĕçлеме тытăннăранпа çулталăк ытларах çеç иртнĕ-ха. Анчах вĕсем хăнăхса çитнĕ, пур ĕçе те тимлĕн тума вĕреннĕ.

Çак ватă старриксемпе çамрăк хĕрачасен коллективĕ — пĕр шухăшлă, хастарлă коллектив. Вĕсен паха ĕçне «Коминтерн» колхозра çеç мар, пĕтĕм районри колхозниксем те пахаласа мухтаççĕ.

1941 çулта «Коминтерн» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство планне срокченех пурнăçларĕ. 1942 çул тĕлне сурăхсем ĕрчетмелли плана 140 процента яхăн, майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли плана 120 процент ытла тултарнă. Чăх-чĕпсен хисепне 208 пуç вырăнне 453 пуçа çитернĕ.

Выльăхсен продуктивноçĕ те пысăккăн ӳсрĕ. Доярка М. Иванова 7 ĕне пăхать. Планлă задани тăрăх унăн ĕнесенчен çулталăк хушшинче 6300 литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, вăл 8050 литр суса илнĕ. Доярка А. Федотова юлташ хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен планран ирттерсе 732 литр сĕт суса илнĕ. Филиппов юлташ, 33 сурăхран 37 путек илсе, пурне те пăхса ӳстернĕ тата вăл пăхакан путексем 10 уйăх хушшинче пăт çурă туртакан пулнă, 11 такаран 3-шер килограмм çăм илес вырăнне 5-шер килограмм илнĕ.

Иртнĕ çулта колхозра ама выльăхсене пурне те чуптарса хăварнă. Çавăнпа кăçал çĕнĕ выльăхсене йышăнма фермăра ĕçлекенсем уйрăмах тимлĕн хатĕрленеççĕ. Кăçал выльăхсен хисепĕ халиччентинчен икĕ хут ытла ӳсмелле. Фермăсенче ĕçлекенсем халĕ çакăншăн кĕрешеççĕ. Паянхи куна 8 ĕне пăруланă та ĕнтĕ. Ферма заведующийĕ Зайцев юлташ учет ĕçне аван йĕркеленĕ, вăлах выльăхсене рацион тăрăх тăрантарас ĕçе ертсе пырать.

— Сталин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене фронт валли аш-какай ытларах та ытларах парса тăма чĕнчĕ. Çулпуç чĕнĕвĕ пирĕн ĕçĕн программи пулса тăчĕ, çавна пурнăçа кĕртме эпир хамăрăн пĕтĕм вăя, пултарулăха паратпăр, — тет ферма заведующийĕ Зайцев юлташ.

Зайцев юлташ сăмаха ахаль хăвармасть. Вăл тăрăшнипе колхоз 1941 çулта государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăм таратмалли обязательствăсене çуллах пурнăçланă, 1942 çулшăн 6 центнер аш-какай панă тата çывăхри 3 колхоза государствăна çăм парса татма пулăшнă. Кунсăр пуçне колхоз Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕршер литр сĕт тата 10 килограмм çăм панă.

Фермăра ĕçлекенсен малашнехи ĕçсенчи ĕмĕчĕсем пысăк.

— Отечественнăй вăрçă кунĕсенче эпир те хисеплĕ вырăнта тăратпăр. Ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, 1942 çулта выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ӳстерес, вĕсен продуктивноçне хăпартас тĕлĕшпе татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума шантаратпăр, — теççĕ вĕсем.

И. МАЛОВ.

Юханшывсен вăйĕпе усă курасси

Пирĕн республикăн территорийĕ тăрăх сахал мар шывсем, пĕчĕк çырмасем юхса иртеççĕ. Кашниех вĕсем ялсем витĕр, е ялсен айккипе юхса выртаççĕ.

— Çав çырмасен вăйĕпе усă курма май çук-ши? Çак ыйтăва татса парас задачăна лартнă хăйĕн умне Чăвашсен Сельэлектро контори.

— Эпир Чăваш республикинче электрификацилес плана турăмăр,—терĕ пире Сельэлектро конторин управляющийĕ Маркин юлташ.—Эпир шутласа кăларнă тăрăх, Чăваш республикинчи юханшывсем çинче 300 гидростанци туса лартма пулать. Çав гидростанцисен вăйĕпе промышленность предприятийĕсенчи машинăсемпе станоксене, колхоз производствинчи машинăсене ĕçлеттерме тата колхозниксен çурчĕсенчен 75 процентне электричествăпа çутатма çителĕклĕ пулать.

Çав гидростанцисене çулран-çул пĕрин хыççăн теприне туса пирĕн хирсенче юхса выртакан çырмасен вăйне пĕтĕмпех колхозсен чечекленекен хуçалăхне ямалла.

Отходсемпе усă кураççĕ

Производствăра пулакан отходсемпе усă курас тĕлĕшпе Карач ялĕнчи (Октябрьски р-н) «Труд» промартель коллективĕ калама çук пысăк пуçарулăх кăтартрĕ. Тир тăвакан цехра уйрăмăнах хаклă отходсем—çăм, çу, шăрт тата ыт. те пулаççĕ. Çак отходсемпе рабочисем туллин усă кураççĕ. Вĕсем хăйсен пуçарулăхĕпех тир тăвакан цехра пулакан çăмран Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли чăлха пуçсем çыхса хатĕрлеме тытăнчĕç. Çак ĕçе тума правлени çĕнĕрен рабочисем хушса пама шутланипе артель коллективĕ килĕшмерĕ. Артельри комсомолецсемпе çамрăксем çак ĕçе смена пĕтнĕ хыççăн юлса ĕçлеме хăйсем çине обязательство илчĕç. Çамрăксен пуçарăвĕпе ытти рабочисем те чăлха пуçсем çыхас ĕçе активлăн хутшăнчĕç.

Кунсăр пуçне тир тăвакан цехри рабочисем 558 сысна тирĕ тасатсах 30 пăт ытла çу пухнă. Халĕ çав çăва шăратса машинăсем сĕрмелли çу тăваççĕ, юлашки юлнă кăварчи чăх-чĕпсем, сыснасем валли паха апат пулать.

Артель правленийĕ производствăна куллен анлăрах сарса пырассишĕн тăрăшса ĕçлет. Халĕ вăл супăнь производствин организацилеме шутлать.

1941 çулта артель планпа пăхман отходсемпе чĕртаварсенчен 24.265 тенкĕлĕх çăматă, 51.614 тенкĕлĕх тĕрлĕрен пир-авăр тата 10.000 штука ытла кирпĕч туса кăларчĕ.

И. МОКЕЕВ.

Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешме вĕренсе тухрĕç

СОВЕТСКОЕ. Вĕсем чылайăн. Пурте 18—19 çулти çамрăксем—комсомолецсем. Тăшман танкĕсене хирĕç кĕрешес ĕçе икĕ эрне хушши вĕренчĕç. Халĕ вĕсем зачет параççĕ. Хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ.

— Огонь!.. илтĕнет командир сасси. Окопра выртакан Н. Волков боец танк макечĕ çине çунакан шĕвек тултарнă бутылкăна вăркăнтарать. Танк макечĕ çулăм ăшне путать. Волков юлташ «отлично» паллă илет. Çавăн пекех И. Петров, П. Прокопьев, Г. Волков, И. Васильев, И. Цветков боецсем те пĕрер бутылка ывăтсах зачета отлично параççĕ.

ВЛКСМ райкомĕ çумĕнчи агитаципе пропаганда енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссин председательне И. Логинова, И. Сорокин, Е. Усов, Г. Климентов, В. Долгов комсомолецсене вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пынăшăн, заданисене вăхăтра пурнăçланăшăн командир тав тунă. Вĕсем вĕренĕве «отлично» паллăсемпе вĕçленĕ.

Çамрăксем, ирсĕр фашистсен танкĕсене çĕмĕрмелли ăсталăха вĕреннипе пĕрлех, тӳсĕмлĕ пулма та хăнăхрĕç. Йĕлтĕрсемпе 20 километрлă похода кайса килчĕç.

Вĕреннĕ вăхăтра «Истребители танков» ятлă боевой листока йĕркеллĕн кăларса тăнă. Боецсем çирĕп дисциплинăшăн кĕрешрĕç. Йĕркене пăсакансем çинчен çийĕнчех сӳтсе-явнă.

— Танк истребителĕсен взвочĕ пит тимлĕн, пысăк хастарлăхпа вĕренсе пычĕ. Всевобучăн ытти подразделенийĕсемпе танлаштарсан, вĕсем яланах малта,—тесе хак парать вĕсем çинчен всевобучăн вĕренӳ пункчĕн начальникĕ Ординов юлташ.

Д. ШУВЕР.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Ачасем оборона ĕçне юратаççĕ

КАНАШ. Вăтакас-Татмăшри туллимар вăтам шкулти вĕрентекенсемпе вĕренекенсем оборона ĕçне питĕ тимлĕн вĕренсе пыраççĕ. Оборона значокĕсен нормисене лайăх парассишĕн Аччари туллимар вăтам шкулпа социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Ăмăрту договорне çирĕплетнĕ хыççăн шкулта класпа класс хушшинче те ăмăрту анлăн саралса кайрĕ. Ачасем урoксене лайăх хатĕрленсе пынипе пĕрлех, оборона значокĕн нормисене пама та вĕренчĕç. Чи малтан, шкулти учительсем ПВХО нормисене пурте пекех «отлично» паллăсемпе пачĕç. Уйрăмăнах V-мĕш «А» класăн руководительници Седова юлташ пур ыйтусем çине те лайăх ответлесе, «отлично» паллă илчĕ. Çавăн пекех Седова ертсе пыракан класри ачасем те пурте ПВХО нормине панă.

Шкулти вĕренӳ отличници Тоня Сумникова ПВХО нормине отлично тытрĕ. Ытти ачасем те: Н. Артамонов, С. Артемьев, Яранскоа, А. Капитонова, В. Смирнов, М. Андреев, Н. Степанова, Н. Капитонова тата ыттисем те ПВХО нормисене отлично пачĕç. Ку енĕпе Артемьевпа Степанов инструкторсем тăрăшса ĕçлерĕç.

Халĕ ачасем БГТО значокĕн хĕллехи нормисене параççĕ.

Т. ТУРХАН.

Тимуровецсен командисем тата вĕсене ертсе пырасси

ШАХАСАН. Тимуровецсен командисем районра пĕтĕмпе 24 шутланаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем аван ĕçлеççĕ. Тăрăнти пуçламĕш шкулта тимуровецсен командине Самсонов ертсе пырать. Унăн командинче 25 ача. Команда членĕсем колхоз производствине активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Аван çаплă çĕрте ĕçлекен ачаллă колхозницăсен çемьисене 12 пионерка тăтăшах пулăшса тăнă, халĕ вĕсем Хĕрлĕ Çар ретне кайнă красноармеецсен 4 çемьине пулăшаççĕ. Çак çемьесене тимуровецсем çĕрулми кăларса панă.

Тимуровецсем çĕршыва, Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе те хастарлăн ĕçлеççĕ. Командăри 25 пионер 2,5 тонна тимĕр-тăмăр, пĕр центнер шăлан çырли, эмелсем валли 500 кĕленче ытла пухнă.

Çавăн пекех Авăспӳрт Кибеч вăтам шкулĕнчи тимуровецсен команди те начар мар ĕçлет. Ку шкулта виçĕ команда, вĕсем 75 ачана пĕрлештерсе тăраççĕ. Команда членĕсем чылай палармалла ĕçсемех туса ирттерчĕç. Пĕр тонна тимĕр-тăмăр, 70 килограмм кăтчанкă тымарĕ, икĕ килограмм кăтчанкă вăрри, 5 килограмм шăлан çырли, 200 килограмм кăмпа тата 120 кĕленче пухса панă.

Çĕнĕ Мамли туллимар вăтам шкулĕнчи тимуровецсен команди Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 105 улăм тӳшек туса панă, «Комсомол Чувашии» бронепоездa тунă çĕре 202 тенкĕ укçа хывнă, 2,8 килограмм тĕслĕ металл пухнă.

Анчах та, калас пулать, ВЛКСМ Шăхасан райкомĕ тимуровецсен командисене тивĕçлипе ертсе пымасть, вĕсен ĕçĕсем çинчен те тĕплĕн пĕлмест.

С. ШАДИН,
В. ЯКОВЛЕВ.

ХĔРЛĔ ÇАР КУННЕ КОЛХОЗСЕМ ÇУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНСЕ ÇИТНИПЕ КĔТСЕ ИЛĔССИШĔН

Совет халăхĕн ирсĕр те кĕмсĕр тăшманне çĕнтерӳллĕн çĕмĕрсе, çĕршывран хаяллла хăваласа пыракан паттăр Хĕрлĕ Çарăн уявĕ çывхарса килет. Çав куна Шăхасан районĕнчи нумай колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне районри колхозсем уя 9.234 тонна тислĕк кăларнă, 2.016 гектар çинче юр тытса купалантарнă, 1.149 центнер вăрлăхсене сортласа, тасатса хатĕрленĕ, 145 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 471 центнер кĕл пухнă.

Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Атнашри Киров ячĕпе тăракан, Çĕнĕ Пинерти «Пинер» колхозсенче аван ĕçлеççĕ. Кунта вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех сортласа çитернĕ, ялхуçалăх машинисемпе транспорт инвентарĕсене юсаса тирпейлесе хунă. Халь вĕсем уйра юр тытас, тислĕк кăларас тата вырăнти удобренисене пухас тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлеççĕ. Кунта колхозниксене агротехникăна вĕрентес тĕлĕшпе те ĕçе аван организациленĕ.

Çакнашкалах Вăрмапн Енĕшри «Свобода», Ăвăспӳрт Кипечри «Березовка», Çĕнĕ Чалкасси ялсоветĕнчи «Новая жизнь» колхозсем те çуракине Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне хатĕрленсе çитессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Сортлă та паха вăрлăхсем тырпул тухăçлăхне ӳстерсшне кура колхозсем нумайĕшĕсем сортлă та паха вăрлăхсем хатĕрлеççĕ, сортсăр вăрлăхсене сортлă вăрлăхсемпе улăштараççĕ, вăрлăхсене сортласа тасатаççĕ. Ку тĕлĕшпе Киров тата Калинин ячĕпе тăракан, «Заря» колхозсем аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсен, çулсеренхи пекех, вăрлăхсем сортлă, таса тата çителĕклĕ.

Шăхасанти машинно-тракторнăй станци те çуракине хатĕрленес ĕçе анлăн пуçарса ячĕ. Февралĕн 15-мĕш тĕлне мĕнпур тракторсемпе машинăсене юсаса çитерме пулнине халь ĕнтĕ срокченех пурнăçлаççĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Районри учрежденисенче ĕçлекенсем трактористсем пулма хатĕрленеççĕ

ИШЛЕЙ. Машинно-тракторнăй станци... район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекенсене вĕренме курс организациленĕ. Курсра служащисем тракторпа ĕçлеме вĕренеççĕ.

Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксемпе МТС конторинчи служащисем пурте курсра вĕренеççĕ. Халĕ пурĕ 36 çын вĕренет. Вĕренекенсен шучĕ татах хушăнмалла.

В. МАТВЕЕВ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Район центрĕнчи учрежденисенче ĕçлекен служащисемпе ответлă работниксем январĕн 13-мĕшĕнче машинно-тракторнăй станцире организациленĕ курсра трактор ĕçне вĕренме тытăнчĕç. Вĕренӳ каçхи вăхăтсенче, тĕп ĕçрен уйăрăлмасăр пулса пырать. Курсра халĕ 26 çын тăрать. Вĕсен шутĕнче СССР Верховный Совечĕн депутачĕ райсовет исполкомĕн председателĕ О. Т. Харитонова юлташ та пур. Районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсемпе машинно-тракторнăй станцин конторинчи служащисем пурте трактористсем пулма хатĕрленеççĕ.

Курса машинно-тракторнăй станцин аслă агрономĕ М. Перлов юлташ ертсе пырать. Трактор ĕçне машинно-тракторнăй мастерскойăн аслă механикĕ П. Кудрявцев вĕрентет. Ку тарана çитсе курсăн икĕ занятий пулса иртнĕ, вĕсем дисциплинăллă та йĕркеллĕ пулнă. Теорие вĕреннине çийĕнчех практикăллă ĕçпе çирĕплетсе пыраççĕ. Курсра вĕренекенсен йышĕ татах ӳсмелле.

В. В.

* * *

СЕНТЕР. Пирĕн районран чылай трактористсем фронта нимĕç фашисчĕсене пĕтерме кайрĕç. Вĕсен вырăнне çуркунне тракторсемпе ĕçлеме эпир тăратпăр.

Эпир, Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕнче вĕренекенсем, тракторпа ĕçлеме вĕренме тытăнтăмăр. Ку ĕçе пирĕн 122 сехетлĕ программа тăрăх эрнере 4-шар сехет вĕренмелле. Халĕ пурĕ 4 урок пулса иртрĕ. Вĕренме питĕ интереслĕ. Çуркуннеччен трактора вĕренсе çитсе ĕçе тухма хатĕр пулатпăр.

Ф. ЯНДУШКИН.

* * *

ВĂРНАР. Çак кунсенче Вăрнар районĕнчи машинно-тракторнăй станци çумĕнче тракторсем хатĕрлекен курс уçăлчĕ. Курсра пурĕ 38 çын вĕренет, вăл шутран 20-шĕ çамрăк хĕрачасем.

Н. ЗАХАРОВ.

* * *

ЕЛЧĔК. Чылайранпа ĕнтĕ МТС çумĕнче 30 хĕрача трактористсен курсĕнче вĕренеççĕ. Юлашки вăхăтра вĕренекенсен шучĕ татах та ӳсрĕ. ВЛКСМ райкомĕ пуçарнипе хĕллехи каникул вăхăтĕнче 35 комсомолка-учительница трактор çинчен вĕренме пуçланă. Учительницăсем пысăк хавасланпа вĕренеççĕ, шкулта вĕрентме пуçличчен программăна вĕçлеме шутлаççĕ.

Нимĕç фашисчĕсене ылханатпăр

СЕНТЕРВĂРРИ. Çак кунсенче Упакасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче колхоз членĕсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Пухусенче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташăн нотине тимлĕн вуласа ăнлантарса панă. Пухура пулнă колхозниксем нумайĕшĕсем, красноармеецсен арăмĕсемпе амăшĕ-аммăшĕсем фашистла юнлă оккупантсен тискер кайăкла хăрушă ĕçĕсене хаяррăн ылханаççĕ. Колхозниксем çĕршыв оборонин хăватне ӳстерме, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне вăйлăн пулăшма, паттăр боецсем валли ăшă тумтирсем пама пулчĕç.

«Трактор» колхоз членĕсем çак кунсенче—8 мăшăр çăмата, 4 кĕрĕк пиншак, 4 мăшăр перчатка, 8 мăшăр носки, Сталин ячĕпе тăракан колхоз—6 мăшăр çăмата, 3 кĕрĕк пиншак, 3 мăшăр перчатка, 6 мăшăр носки, «Малалла», Максим Горький тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем те Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухаççĕ. Пурĕ Упакасси ялсоветне кĕрекен колхозсем 5 килограмм ытла çăм, 96 тир тата 40 мăшăр алшиш-носки çыхмалăх çăм пачĕç. Ăшă тумтирсем пухас ĕç малалла та анлăн сарăлса пырать.

Г. ЗАКАМСКИЙ.

Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленетпĕр

ВĂРНАР. Районри оргкомитет кроса хатĕрленес ĕçе план тăрăх туса пырать.

Нумаях пулмасть районĕпе мала тухассишĕн ăмăрту пулса иртрĕ. Унта 111 çын пулнă. Вĕсенчен 70-шĕ ГТО значокĕн хĕллехи нормине панă. Ăмăртура Аркадий Новиков (вăтам шкул) 10 километра 53 минутăра, Пелагея Иванова (леспромхоз) 5 километра 26 минутăра кайса килсе малти вырăна тухрĕç.

Шкулсенчи, колхозсенчи организацисенче тăтăшах тренировкăсем туса ирттереççĕ. Ку ĕç уйрăмах Кольцовкăра, Кĕçĕн Явăшра, райцентрти вăтам шкулта, прокуратурăра, НКВД çумĕнчи организацисенче аван пырать.

Иртнĕ канмалли кун Вăрнарти вăтам шкулта ăмăрту пулса иртрĕ. Унта 20 çын БГТО значокĕн нормисене пачĕç.

В. МАКСИМОВ.

Походсем туса ирттереççĕ

ШĂХАСАН. Çак кунсенче Шуркасси вăтам шкулĕнче вĕренекенсем 30 километрлă йĕлтĕрлĕ поход туса ирттерчĕç. Унта 19 ача хутшăннă. Походра 8-мĕш класри Гурьев, Матвеев, Ильин тата 9-мĕш класри Н. Филиппов, Н. Федоров вĕренекенсем йĕлтĕрпе хăвăрт тата пысăк ăсталăхпа çӳреме пĕлнине кăтартрĕç.

Шăхасан вăтам шкулĕнче вĕренекенсем те çак кунсенче 25 километрлă йĕлтĕрлĕ поход тата 50 километрлă çуран поход туса ирттерчĕç. Унта 9-мĕшпе 10-мĕш классенче вĕренекенсене пурне те явăçтарнă. Походсенче Герасимова, Слесарев, Скворцова, Сорокин юлташсем хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕç.

В. Я.

Автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвĕ çине ответлесе

Сталин ячĕпе тăракан автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне Вăрнарти учрежденисемпе предприятисенче, колхозсенче сӳтсе-яваççĕ. «Труд» артельре ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле 1-мĕш квартал планне 150 процент тултарма обязательство илнĕ. Яков Сорокинпа Иван Васильев комсомолецсем кашни кун 1,5 норма тултарма пулчĕç.

Вăрнарти вăтам шкулта вĕренекенсем те автозаводри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвне сӳтсе-явнă. Шкулти комсомолецсем отлично вĕренме, йĕлтĕрçĕсен кросне лайăх хатĕрленсе кăтартуллă ирттерме, районра пĕрремĕш вырăна тухма обязательство илнĕ.

Пулă тытас ĕçе механизациленĕççĕ

Чăвашрыбтрест планĕ тăрăх, кăçалхи çул республикăри пулă тытакан артельсемпе колхозсенчи пулă ĕрчетекен фермăсен 3000 центнер пулă тытмалла.

Кăçалхи çултан пуçласа Атăл çинче пулла механизациленĕ майсемпе (траловый лов) тытма пуçламалла.

С—в.

Государствăна тырă сутаççĕ

ВĂРМАР (телефон тăрăх). Государствăна тырă сутас ĕç колхозсенче куллен кун вăйлăланса пырать. Çак кунсенче «Комбайн» колхоз 540 пăт, Тикĕш колхозĕ 810 пăт тырă сутрĕç. Районĕпе январĕн 15-мĕш тĕлне пурĕ 5.000 пăт сутнă.

Ку ĕç малалла сарăлса пырать. Колхоз хыççăн колхоз ялпосемпе тырă сутма договорсем тăвать. Пурĕ халĕ 15.000 пăтлăх договор тунă.

Кашни килограмм, кашни пĕрчĕ совет халăхĕн ирсĕр тăшманне çĕршывран часрах хăваласа кăларма хайтăр.

КРЮЧКОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЭЛĔК. Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра тăван çĕршыва тырпул нихăçанхинчен нумай кирлĕ. Çакна лайăх ăнланнă колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен ытлашши тыррине государствăна кооперации урлă сутма тытăнчĕç. Тури Вылăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем колхозăн пĕрлешӳллĕ фондĕнчен государствăна 105 центнер, хăйсем хушшинчен 7 центнер та 20 килограмм сутаççĕ. Çавăн пекех «Красный Октябрь» колхоз—80 центнер, Хураварти «Заветы Ильича» колхоз—70 центнер, Торпкассинчи Урицкий ячĕпе тăракан колхоз—30 центнер тĕштырă сутрĕç.

М. КУСТИКОВ.

* * *

ÇĔРПУ. «Красный флот» колхоз государствăна сельпо урлă 15 центнер, колхозниксем 418 килограмм тĕштырă сутрĕç. Çавăн пекех «Этна» колхоз та государствăна 65 центнер, колхозниксем 212 килограмм сутма йышăнчĕç.

Хăйсен ытлашши тыррисене ытти колхозсем те государствăна сутаççĕ.

Г. П.

* * *

ЕЛЧĔК. Районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем государствăна кооператив урлă тырă сутассине вăйлăн сарса пыраççĕ. Патрекел ялсоветне кĕрекен «Осоавиахим» колхоз 40 центнер, колхозниксем хăйсен тупăшĕнчен 40 центнер ытла тырă государствăна сутрĕç. Çавăн пекех «Красные Темяши» колхоз—40 центнер, колхозниксем—257 пăт сутрĕç.

А. ПАЛАШКИН.
Ф. ИВАНОВ.

* * *

ИШЛЕЙ. «Ыраш пулăх» колхоз членĕсем государствăна кооператив урлă 35 центнер, Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 500 центнер ытла тырă сутрĕç. «Мировой Октябрь» колхоз членĕсем хушшинче В. Молотов юлташăн нотине вуласа ăнлантарса панă хыççăн государствăна тырă сутас ĕç палăрмаллах вăйланчĕ. 70 çулти ватă колхозник Я. Баргеев юлташ пĕр центнер, Красильников, Скобелев тата ыттисем те çуршар центнер сутрĕç. Колхоз хăйĕн фондĕнчен 22 центнер сутма палăртнă.

Е. СЕМЕНОВ.

Культсбор укçине тӳлеççĕ

ВĂРНАР. Пăва ялсоветĕнчи налог агенчĕ колхозниксене культсбор укçи тӳлемелли извещени салатса пачĕ. Колхозниксем нумайĕшĕсем культсбор укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕç. Е. Григорьев юлташ 21 тенкĕ, Н. Анисимов юлташ 27 тенкĕ, М. Трофимов юлташ 27 тенкĕ тата ыттисем те тӳлерĕç. Халĕ колхозниксем пурте культсбор укçине срокчен тӳлесе татассишĕн тăрăшаççĕ.

И. КОРАКОВ.

Хĕрлĕ Çар валли аш-какай

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çĕрпӳ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз членĕсен пуçарăвне колхозсем пысăк çĕкленӳпе йышăнса илнĕ. Кужар ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли выльăхсем самăртса пама пулчĕç. П. Леваков колхозник Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 6 кролик самăртма тытăнчĕ тата пĕр килограмм çу пачĕ. Н. Аксаков колхозник—пĕр кăркка, пĕр кăчака, А. Ефимов колхозник—икĕ хур, икĕ чăх, 3 килограмм аш-какай пама, Т. Иванов, Ф. Родионов колхозниксем—пĕрер сурăх, Н. Алексеев—икĕ хур, И. Суслов—пĕр така самăртма тытăннă.

Тĕрер ялсоветĕнчи «Красная Чувашия», «Труд», «Правда» колхозсен колхозникĕсем пурĕ 116 чăх, пĕр кăвакал, икĕ сысна, пĕр сурăх, пĕр вăкăр самăртаççĕ.

И. Х.

* * *

КӲКЕÇ. Çĕрпӳ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли выльăх-чĕрлĕх самăртса пама республикăри мĕнпур колхозсемпе колхозницăсене чĕнсе калани çине ответлесе, Хыркасси ялсоветĕнчи «Чаплавар» колхоз Хĕрлĕ Çар валли 8 сурăх, 3 сысна самăртса пама пулчĕ. Колхозниксем хăйсен хуçалăхĕсенчен 12 сурăх, 30 чăх самăртса параççĕ. С. Архипов, Федоров, Е. Матвеев юлташсем пĕрер сурăх самăртма тытăнчĕç. Шуркка ялсоветĕнчи «Победа» колхоз Хĕрлĕ Çар валли пĕр ĕне самăртса парать.

Иккасси ялсоветĕнчи «Броневик» колхоз членĕсем те хăйсен хуçалăхĕсенче пĕрер выльăх самăртса пама пулчĕç.

И. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

ВĂРНАР. Пăва ялĕнчи «Большевик» колхоз оборона фондне 100 центнер тырă, 2 центнер махорка, 4 центнер аш-какай пама йышăнчĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли колхоз 6 сысна, колхозниксем 10 сысна, 100 чăх самăртма тăтăнчĕç.

И. К.

Хĕрлĕ Çар валли кайăк-кĕшĕк ӳстереççĕ

СОВЕТСКОЕ. Елчĕк вăтам шкулĕнчи пионерсемпе шкул ачисем республикăри мĕнпур пионерсемпе шкул ачисене кашнинех Хĕрлĕ Çар валли пĕрер кайăк-кĕшĕк ӳстерсе пама чĕнчĕç. Çак чĕнĕве районри нумай шкулсенче сӳтсе-яврĕç. Салугинăри пуçламĕш шкулта вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар валли 55 чăх, 20 кăвакал, 15 хур ӳстерсе самăртма пулчĕç. Вĕренӳ отличникĕ Н. Леонтьев — 2 чăх, В. Алексеев — пĕр чăх, пĕр кăвакал самăртса параççĕ. Районри ытти шкулсенче вĕренекенсем те кашниех пĕрер кайăк-кĕшĕк самăртса парассишĕн тăрăшаççĕ.

Л. АЛЕКСЕЕВА.

Государствăна аш-какай парас ĕçе вăйсăрлатмастпăр

ЭЛĔК. Хĕрлĕ Çар фашистла захватчиксене хăвăртрах çапса аркаттăр тесен, пирĕн фронта пулăшас ĕçе вăйлатсах пымалла. Фронт мĕн ыйтнине васкавлăн парса тăмалла.

Районĕпе 1941 çулшăн государствăна аш-какай тăратмалли плана ирттерсе тултарнă. Малта пыракан колхозсем государствăна 1942 çулшăн аш-какай пама тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе Элĕк, Тавăт, Крымзарайка, Татмăш т. ыт. ялсоветсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Государствăна 1942 çулшăн аш-какай памалли плана Хирлепшуç колхозĕ 70 процент, Яргуньжа колхозĕ 70 процент, Шуркасси колхозĕ 65 процент, Йăлкăш колхозĕ 58 процент, Сулавăç колхозĕ 55 процент тултарнă та ĕнтĕ. Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ К. Киселев юлташ) государство умĕнчи аш-какай планне 1942 çулшăн йăлтах парса татнă.

Анчах колхозсем аш-какай памалли плана тултарассишĕн пурте мар-ха тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăшпĕр колхозсем 1941 çулшăн та парса татман. Вылă, Уйкас, Алгукасси колхозĕсем аш-какай памалли 1941 çулти плана 50 процент çеç пурнăçланă.

Государствăна аш-какай парассине вăйсăрлатмалла мар. Фронта аш-какай çителĕклĕ таран парса тăрассишĕн большевикла кĕрешмелле.

М. ЯСТРАН.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекенсене премиленĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри пичетсоюз 1942 çулшăн ĕççыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас плана ирттерсе тултарас ĕçре пысăк çĕнтерӳ турĕ. Ку ĕçре уйрăмах тăрăшса ĕçлекенсем палăрчĕç. Кĕçĕн Каçалти «Красный маяк» колхозри 60 çулти М. Кадкин 15 çул хушши письмоносец пулса ĕçлет. Хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа тăвать, хаçат-журнал сарас плана яланах тултарса пырать. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн çыхăну кантурĕ 125 тенкĕ укçа парса премилерĕ. Çавăн пекех Я. Малышев («15 лет Чувашии» колхоз), С. Смирнов («Красный Октябрь» колхоз), Петрова («Дуброва» колхоз) письмоносецсене кашнинех 100-шер тенкĕ, Сереброва («Ленинское знамя» колхоз) письмоносеца 75 тенкĕ преми панă.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе Çĕнĕ Мăратри почта уйрăмĕ (начальникĕ Н. Герасимов) лайăх ĕçлесе плана аван пурнăçларĕ. Тăманлă Выслире Давыдов 10 çул письмоносец пулса ĕçленĕ. Вăл фронта кайсан ун вырăнне унăн хĕрачи Давыдова Мария письмоносец пулса ĕçлеме тытăннă, вăл хаçат сарас плана ăнăçлăн пурнăçланă. Çавăн пекех Тугай, Вутлан, Аслă Çĕрпӳел ялĕсенчи письмоносецсем те аван ĕçлерĕç.

В. ВИКТОРОВ.

„Йĕплĕ калавсем“

10—12 çул каярах чăвашсен кулăшла литературин коллективлă пĕрремĕш сборникне пичетлесе кăларнăччĕ. Вăл кĕнеке хăй те пĕчĕккĕччĕ, авторĕсем те 5—6 çын кăначчĕ.

1941 çулăн юлашки уйăхĕсенче Чăвашсен Государство издательстви кулăшла калавсен пĕрлешӳллĕ иккĕмĕш сборникне «Йĕплĕ калавсем» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Ку кĕнеке вулакансене чăвашсен кулăшла литературин 20 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсемпе паллаштарать. Кĕнекене фашизма хирĕçле фельетонсем, пурнăçри тӳнтерле типсемпе сăн-сăпатсене питлекен, халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларакан калавсем т. ыт. те кĕнĕ (пурте прозăпа çырнисем). Унта Иван Мучи, Хумма Çеменĕ, Ф. П. Павлов, Этмен, С. Ялавин, И. Е. Тăхти, Сенĕк, М. Н. Данилов-Чалдун, И. Тукташ, Н. Чурбай, Леонид Агаков, Хветĕр Уяр, Никита Волков, Г. Савгай тата ыттисен произведенийĕсем те кĕнĕ.

Кĕнекен пысăкăшĕ 10 пичетлĕ листа, хакĕ 8 тенкĕ.

«Йĕплĕ калавсем» сборник кашни шкулта, клубсемпе вулав çурчĕсенче, кашни вулаканăн килĕнче пулма тивĕç.

Чĕртир хатĕрлес ĕçе лайăх организацилемелле

Калинински районри колхозниксем 1941 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре палăрмалла ӳсĕмсем турĕç. Çавна май чĕртир хатĕрлев ĕçне те чылаях лайăхлатрĕç.

Услапари «Броневик» колхоз иртнĕ çулта государствăна чĕртир памалли обязательствăна пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл чĕртир хатĕрлев планне ытлашшипех тултарчĕ.

Çавăн пекех Кивçурт Мăратри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз, Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз, Шуркассинчи «Социализм» тата ытти колхозсем те государствăн чĕртавар базине çирĕплетес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхоз, чĕртир памалли обязательствăна йĕркеллĕ пурнăçласа пынипе пĕрлех, оборона фондне 60 тир ытла пачĕ. Çавнашкал паха тĕслĕхсем районра татах та пур.

Апла пулин те район чĕртир хатĕрлев планне тултарайман. Уполнаркомзаг даннăйĕсем тăрăх, 1941 çулти декабрĕн 29-мĕш тĕлне район вăтам тирсем хатĕрлемелли плана ытлашшипех тултарнă пулсан, шултăра тирсемпе сысна, сурăх тирĕсене хатĕрлес плана тултарайман. Ку ĕç уйрăмăнах единоличниксен хуçалăхĕсем енĕпе япăх пырать.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç отечественнăй вăрçă туса пынă вăхăтра пирĕн промышленность валли ытларах та ытларах чĕртавар парса тăмалла.

Хăшпĕр колхоз руководителĕсем те чĕртир памалли обязательствăна пурнăçлассишĕн тăрăшмаççĕ. Çĕршыва чĕртавар кирлине халĕ те туйса илмеççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз пĕр тир те паман. Çавăн пекех Кабацкири «Победа», Иккĕмĕш Ялдрари Чапаев ячĕпе тăракан, Кăкшăмри «Ĕç ялавĕ» тата Уйкас Юнтапари «Çĕнĕ пурнăç» колхозсенче те чĕртир парас обязательствăсене сӳрĕккĕн пурнăçласа пыраççĕ.

Райпотребсоюз хатĕрлев конторин те, та районри уполнаркомзагăн чĕртир хатĕрлев ĕçĕнче татăклă улшăну тумалла.

Т. БЕЛОВ.

Ĕççыннисен культурăпа йăла условийĕсемшĕн тăрăшассине чакармалла мар

Çак кунсенче Канаш хула Совечĕн черетлĕ 18-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси ĕççыннисен культурăпа йăла условийĕсемшĕн тăрăшасси çинчен сӳтсе-яврĕ. Ку ыйтупа хула Совечĕн исполком председателĕ Майоров юлташ доклад туса пачĕ.

Вăрçă пурнăçăн пур енĕсене те улшăнусем кĕртрĕ, халăхăн культурипе йăлинчи куллен кирлĕ нушисене пысăклатрĕ. Ĕççыннисен пурнăçпа ĕç условийĕсемшĕн кĕрешни фронтшăн кĕрешни пулать, мĕншĕн тесен çакă вăл пирĕн тыла татах та ытларах тĕреклетме пулăшать.

Çакăн пек ăнланупа сӳтсе-яврĕ сесси хăйĕн умне лартнă питĕ кирлĕ ыйтăва. Докладран та, çавăн пекех тухса калакансен сăмахĕсенчен те Канашри ĕççыннисен культурăпа йăла условийĕсемшĕн кĕрешес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри тата çав çитменлĕхсене пĕтерессишĕн ку таранччен хула Совечĕ çителĕксĕр тăрăшни палăрчĕ.

Вагонсем юсакан заводри коммунальнăй хуçалăха хĕллене хатĕрлесе çитереймен. Чылай хваттерсенче кăмакасемпе плитасем юсавлă мар, алăксемпе чӳречесем çĕмрĕк, урайсемпе маччасем шăтăк. Вутă тата ытти япаласем усрамалли уйрăм çуртсем çук. Хăшпĕр рабочисем вутă каскисене коридорсенче çураççĕ, пӳлĕмре татаççĕ.

Коммунальнăй управленири работниксем килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче нимĕнле ĕç те тумаççĕ, рабочисен поселокĕнче тасалăхпа йĕркелĕх кӳрессишĕн ĕçлемеççĕ. Тасамарлăхпа йĕркесĕрлĕх уйрăмăнах чугунçул станцинче нумай. Пассажирсен пӳлĕмне вăхăтра дезинфекцилесе, çуса тата шăлса тасатса тăмаççĕ. Ачасемпе амăшсен пӳлĕмĕнче лăпкăлăх çук; сивĕ, койкисем çĕмрĕк, тӳшек минтерсем таса мар. Тасамарлăха кăтартакан фактсене Канашри чылай урамсенче, кĕтесре, предприятисемпе учрежденисенче курма пулать.

— Хула Совечĕн исполкомĕ ВКП(б) 18-мĕш конференцин решенийĕсене маннă, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсенчен тасалăха тытма ыйтман. Тасалăхпа йĕркелĕхшĕн санинспекци те çителĕксĕр кĕрешет. Санинспекторсем çӳп-çап купинчен такăнса ӳксен те ăна курмаççĕ, — тет ССР Союзĕн Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕн представителĕ Уваров юлташ.

Нумаях пулмасть «Правда» хаçат хăйĕн умстатьисенчен пĕринче чугунçул станцинче «вĕретнĕ шыв проблеми» тухса тăни çинчен çырчĕ. Çак «проблемăна» Канашри станцире те курма пулать. Кубовой йĕркеллĕ ĕçлемест. Шыв памалли виçĕ кранран иккĕшĕ юсавлă мар. Паллах, пĕр кран шыва çителĕклĕ таран парса тăма пултараймасть. Çавăнпа кунта пĕрмаях черет курма пулать.

Канашра икĕ мунча. Вĕсенчен пĕри те йĕркеллĕ ĕçлемест. Хулари мунча — юсавлă мар пирки, чугунçул çинчи —вутă çителĕксĕррипе, час-часах хупăнса тăраççĕ. Хула Совечĕн исполкомĕ юлашки вăхăтра тин вĕсемпе интересленме пуçларĕ. Уйрăм çынсен мунчисемпе усă курмалла тăвас тĕлĕшпе те хула Совет исполкомĕн татăклă ĕçсем тумалла.

Тухса калаçакансенчен нумайĕшĕсем суту-илӳ организацийĕсемпе столовăйсен ĕçĕсене тивĕçлипе критиклерĕç. Хула Совет исполкомĕн суту-илӳ пайĕн заведующийĕ Клокова юлташ ытларах кабинетра ларать, суту-илӳ организацийĕсемпе столовăйсенче пулмасть. Çав вăхăтрах столовăйсем тӳсме çук начар ĕçлеççĕ. Канашторгăн 1-мĕшпе 2-мĕш столовăйĕсенче — тасамарлăх, йĕркесĕрлĕх. Канашторг работникĕсемпе столовăйсен руководителĕсем хăйсен çаврăнăçусăрлăхне пула вăхăтра çĕрулми, купăста, кишĕр, хăяр, аш-какай тата ытти çимĕçсем хатĕрлесе хăварман. Хатĕрленĕ пеккине те кӳрсе килмесĕр лараççĕ.

Хула Совечĕн октябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ 17-мĕш сессийĕ Канашторг директорне Безруков юлташа ытти районсен центрĕсенче хатĕрлесе хунă пахча-çимĕçсене кĕске срокра кӳрсе килме хушса хăварчĕ. Анчах мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлпа тата лăпкăлăхпа пурăнакан Безруков çав решение халĕ те пурнăçа кĕртмест-ха.

— Хула Совечĕн чылай решенийĕсем çакăн пек пурнăçа кĕмесĕр юлаççĕ. Çакă вăл хула Совет исполкомĕн ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕх. Вăл хăйĕн решенийĕсене тĕрĕслесе тăмасть, — тет пренире тухса калаçакан Ржавин юлташ.

Прокурор Григорьев юлташ халăх сывлăхне сыхлакан учрежденисем — поликлиникăпа больница, амбулаторипе аптека; культура учрежденисем — кино-театр, хуларипе районри библиотека, çавăн пекех парикмахерскисем çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Сутĕç работникĕсем Альшицпа Тихонова юлташсем хула Совечĕн исполкомĕ шкул ачисене пулăшас тĕлĕшпе сахал ĕçлени çинчен каларĕç. Исполком шкул нушисем валли уйăрнă укçапа вăхăтра тата тивĕçлипе усă курман. Фронт çывăхĕнчи районсенчен куçса килнĕ ачасене тумлантарас енĕпе халĕ те татăклă ĕçсем тумасть.

ВКП(б) райком секретарĕ М. И. Репкин юлташ вырăнти промышленность ĕçĕсене критиклерĕ.

— Вырăнти промышленность предприятийĕсем,—тет вăл, — васкавлă заказсемпе витĕнсе, культура таварĕсемпе куллен кирлĕ япаласене туса кăларма пăхах пăрахаççĕ. Çавна пула хăшпĕр чух столовăйсенче чашăк-тирĕк, учрежденисенче клей, хуçалăхра сунăнь тата ытти çавăн пек вак-тĕвек япаласем çитменни палăрать. Халĕ пирĕн вăл япаласене урăх çĕртен кӳрсе килесси кĕтмелле мар, хамăрăн тума тытăнмалла. Ку тĕлĕшпе вырăнти промышленность работникĕсен пуçарулăхĕпе тавçарулăхĕ, активлăхĕпе тăрăшулăхĕ кăна кирлĕ. Анчах Канашри артельсемпе мастерскойсен руководителĕсен çак енĕсем курăнмаççĕ. Вĕсем, яланхи пек хускалмасăр пурăнма вĕреннĕскерсем, çӳлтен хушасса кĕтсе лараççĕ. Вăрçă тесе эпир культура таварĕсемпе куллен кирлĕ япаласемсĕр пурăнма пултараймастпăр. Вĕсене хамăрăн тума тытăнмалла.

Сесси хăйĕн умне лартнă ыйтăва тĕплĕн сӳтсе-яврĕ. Халăхăн культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатас ĕçре ку таранччен пулнă çитменлĕхсене палăртса, çитес вăхăтра вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене кăтартса пачĕ.

Т. ИВАНОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Мастерская по ремонту
ПИШУЩИХ МАШИН
и
АРИФМОМЕТРОВ
при Чебоксарском магазине „Динамо"
работает с 10 до 19 часов
с перерывом с 13 до 14 часов
Выходные—по воскресеньям.
„ДИНАМО"

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, ...нци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» ...алăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 343 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 4. 58 ... 84 п. л.